чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, авăн /сентябрь/
13

178-179 /26584-26585/ № №
Хакĕ ирĕклĕ
WWW.hypar.ru

## Людмила АЙДАК:

# «Геройсем мирлĕ пурнăçра та пулаççĕ...»

*...Эп хама санпа юнашарах туятăп, пĕрре калаçаймастăп тата ыталаймастăп анчах. Шухăш – санпах.*

**/Аркадий Айдак çырăвĕнчен/.**

***Икĕ çул каялла авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче чăваш халăхĕ хăйĕн пултаруллă ывăл-хĕрĕнчен пĕрне, Раççей Федерацийĕн культурăн тата ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинне, Етĕрне районĕнчи "Ленинская искра" колхоза нумай çул ертсе пынă Аркадий Павлович Айдака çухатрĕ. Пурăннă пулсан кăçалхи çĕртме уйăхĕнче 77 тултаратчĕ. Шел, пÿрменнине ыйтса илеймĕн теççĕ. Çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ пулин те унăн ячĕ асăмăрта юлма тивĕç. Çакă пирĕнтен те, калем ăстисенчен, нумай килет. Акă мĕнле шухăш-тĕллевпе авăрланса çак кунсенче ĕçтешсемпе Етĕрне районĕнчи Тури Ачака çула тухрăмăр. Телее, пархатарлă сăлтав тата пулчĕ: авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче тăван ялĕнче Аркадий Айдакăн палăкне уçрĕç.***

***Легенда-çын çинчен унăн çемйинчен ытла кам каласа кăтартĕ? Аркадий Павловичпа пĕр сукмакпа 40 çул юнашар утнă Людмила Андреевна Айдак журналистсене хапăлласа кĕтсе илчĕ. Хăйĕн чĕринчен тухми самантсене аса илсе юратнă мăшăрĕ тĕлĕшпе сирĕлми тунсăха пирĕнпе пайларĕ.***

### "Мăшăру ăçта?" – "Кĕтÿре"

Кунти тавралăхăн çут çанталăк хитрелĕхне сăнласа памашкăн кирлех те мар пулĕ: Айдак ятсумĕ çинчен илтнĕ çын пĕлетех ун çинчен. Анчах темĕнле хитрелĕх те, ăна упрама пĕлмесен, пурăна киле хавшатех. Хăрнă пĕр йывăç вырăнне икĕ хунав лартасси йăларан ан тухтăрччĕ те... Çапларах шухăшласа пынă май автомашина ял варринчи палăк патне çитсе чарăннине те сисмерĕм. Унăн умĕнче пĕр хĕрарăм шанма ĕлкĕреймен чĕрĕ чечек çыххисене майлаштарать: çил кăшт хускатнă пулинех. "Кунĕ хĕвеллĕ те паян – ав еплерех çутă Аркадин сăнĕ. Хăнасем çитнишĕн савăнать тейĕн. Хăй пурăннă чухне татăлма пĕлмен те вĕсем – кашни килен çыншăн хĕпĕртет пулĕ", – куççульне сăмса тутрипе шăлнă май Людмила Андреевна чун уççи-калаçăвне пуçларĕ.

Çавăнтах тем аса илсе кулса ярать те çав самантра пире каласа кăтартать:

– 1988 çулта пирĕн колхоза пуçласа ют çĕр-шывран делегаци килсе çитрĕ. "Отчизна" ятпа тĕрлĕ чĕлхепе – вырăсла, акăлчанла, нимĕçле, французла – журнал тухса тăнă, вăл 16 çĕр-шывра саланнă. Пĕрре çапла "Щедрая душа Айдака" статья пичетлеççĕ унта. Çавăн хыççăн "NBS–Ньюс" телекомпанин Лондонри филиалĕн пултарулăх ушкăнĕ пирĕн тăрăха килсе курма тĕллевленет. Хайхискерсем яла çитеççĕ те тÿрех правлени çуртне кĕреççĕ. Эмми Кривицки журналист Аркадий Павловичпа паллашать, интервью илет. "Сăмах май, мăшăрăр ăçта сирĕн?" – кăсăкланать хĕрарăм. "Паян пирĕн çемьен черечĕ те – Людмила уйра кĕтÿ пăхать-ха", – нимĕн пулман пек хуравлать лешĕ. "Эпĕ темĕн ăнланаймарăм-и? Председатель арăмĕ кĕтÿ пăхать-и?!" – тĕлĕннипе акăлчан журналисчĕн чĕлхи çыхланать, куçĕ чарăлать.

8 стр.




Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

«Хыпар» Издательство çурчĕн мĕн пур кăларăмне Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ:

«Хыпар» – 732 тенкĕ те 66 пус.
«Хыпар» – шăмат кун» – 304 тенкĕ те 08 пус.

# Чăваш Ен – Пенза облаçĕ: туслă çыхăну



*Авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пенза облаçĕнче ĕçлĕ тĕл пулусем ирттернĕ. Михаил Васильевичпа пĕрле çул çÿреве ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Министрсен Кабинечĕн членĕсем, Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, бизнес представителĕсем хутшăннă.*

Михаил Игнатьев, Пенза облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Василий Бочкарев "Пензаконцерт" патшалăх учрежденийĕнче пулнă. Вăл Пенза хули 350 çул тултарнă ятпа тунă пысăк 3 концерт залне пĕрлештерет: филармонин Пысăк тата Орган залĕсем, çавăн пекех "Пенза" киноконцерт залĕ.

Пысăк зал 750 çын вырнаçмалăх, классикăран пуçласа эстрада таран чĕрĕ юрă-кĕвĕллĕ концертсем ирттермелли хулари пĕртен пĕр вырăн шутланать.

200 çынлăх залри органа Германири "Hugo Mayer" фирма пуçлăхĕ, орган ĕçĕсен маçтăрĕ Штефан Майер вырнаçтарнă. "Пенза" киноконцерт залĕ – 1600 çын вырнаçакан 4 хутлă комплекс. Çуртра 4 лифт ĕçлет. Иккĕмĕш хутри пысăк фойе куравсем, ăсталăх класĕсем, пултарулăх каçĕсем ирттерме май парать.

Чăваш Ен делегацийĕ çавăн пекех "Дизель арена" Пăр кермене çитсе курнă. Тĕп пăр катокĕнче пулакан вăйăсене хăрасах 5500 çын курса киленме пултарать. Тренировкăсем ирттермелли вырăн та пур. Михаил Игнатьев объектсене пысăк хак панă. Шупашкарта нумай тĕллевлĕ "Пăр кермен" комплекс тунă чухне строительсене Пензăри ĕçтешĕсен опычĕпе усă курма сĕннĕ.

Ял хуçалăх производствипе тирпейлекен промышленноçăн объекчĕсенче те ĕçлĕ тĕл пулусем иртнĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ ял хуçалăхĕн çĕнĕ предприятийĕсенче çамрăксем валли пысăк ĕç укçи тÿлекен вырăнсем йĕркелении, çавна май вĕсенчен чылайăшĕ ялтах юлма тăрăшнине палăртнă. Вырăнти аграрисем пысăк пахалăхлă, сывлăхшăн усăллă, экологи енчен таса продукци туса илеççĕ. Ăна йăлтах потребительсем патне çитереççĕ.

"Эпир Пенза облаçĕпе чылайранпа туслă çыхăну тытатпăр. Влаç органĕсен тĕллевĕ – бизнес валли условисем туса парасси, суя схемăпа усă курса потребительсене улталакан предпринимательсен çулне пÿлесси", – палăртнă Михаил Игнатьев.

Пенза облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Василий Бочкарев Чăваш Ен Пуçлăхне тата республика делегацине вăхăт тупса килнĕшĕн тав тунă, Пенза облаçĕнче чăвашсем нумай пурăннине асăннă. "Пирĕн чăваш диаспори пысăк, вăл ĕçе юратать. Чăваш Ен ăнăçлă аталанать, çĕнĕ индустри вырăнĕсем тăвать. Эпир пĕр-пĕринпе çывăхланассишĕн ĕçлетпĕр. Чăваш Енре туса кăларакан продукци Пенза облаçĕнче те сутăнтăр, Пензăри Шупашкар лавккисен сентри çине çиттĕр", – пĕтĕмлетнĕ Василий Бочкарев.

Республика Пуçлăхĕ, производство тата ял хуçалăх объекчĕсемсĕр пуçне, "Легенда" скульптура паркĕнче пулса курнă. Вăл – Раççейри усă тÿпе айĕнчи скульптурăсен чи пысăк коллекцийĕ. Хальхи вăхăтра паркра 64 çĕршыври мрамортан, гранитран, йывăçран, металран, бронзăран ăсталанă сайра тĕл пулакан 319 произведени упранать.

Михаил Игнатьевпа Василий Бочкарев юлашкинчен Пенза облаçĕн Правительствипе ЧР Министрсен Кабинечĕ хушшинчи сутуилÿпе экономика, ăслăлăхпа техника, общество тата культура тĕлĕшĕнчен малашне те туслă ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă.

■ **В.СТЕПАНОВ**

# Канашсем çĕнĕ хваттерсене пурăнма кĕнĕ

***Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Канашра пулнă. Кунта чукун çул çинче вăй хуракансем нумай хваттерлĕ çуртра пурăнма кĕнĕ. Çавна май иртнĕ савăнăçлă уява Михаил Васильевич тата "Раççей чукун çулĕсем" АУО филиалĕ – Чул хула чукун çулĕсен пуçлăхĕ Анатолий Лесун хутшăннă. М.Игнатьев хваттер уççисене алла илнисене саламласа Чăваш Енпе Раççей чукун çулĕсен ертÿлĕхĕ хушшинче тачă çыхăну йĕркеленнине, халĕччен çирĕплетнĕ килĕшÿсем пурнăçланнине, çавна пула çынсен социаллă ыйтăвĕсене татса пама май килнине палăртнă.***

"Канаш – чукун çулăн 1500 çын ытла ĕçлекен пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕвви. Пирĕн тĕллев – вĕсене тухăçлă ĕçлеме тата лайăх пурăнма мĕн пур май туса парасси. Рабочисем каннă хыççăн пысăк кăмăлпа ĕçлеччĕр", – тенĕ Анатолий Лесун. "Раççей чукун çулĕсем" обществăн пурăнмалли çурт-йĕрĕн ятарлă фондĕнчен инженерсемпе рабочисене хваттер малашне те уйăрма шантарнă вăл.

Çĕнĕ хваттер хуçи Сергей Городнов чукун çулсен ертÿлĕхне, Чăваш Ен Пуçлăхне пурăнмалли вырăнпа тивĕçтернĕшĕн тав тунă. Аслă Çĕнтерÿ ураменче вун икĕ хваттерлĕ çуртра "Раççей чукун çулĕсем" обществăн ĕç вырăнĕнчен сывăхра пурăнма тивĕçлĕ сотрудникĕсем валли технологи пĕлтерĕшлĕ çурт-йĕр хăпартмалли программăпе килĕшÿллĕн тунă. Çĕнĕ хваттерсене чукун çул мастерĕсене, электромеханиксене, тепловоз машинисчĕсене, вакун юсакансене тата пăхакансене уйăрнă.

Канашри чукун çул вокзалĕнче Чăваш Республикипе "Раççей чукун çулĕсем" общество пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан нумай çуллăх килĕшĕве алă пуснă. А.Лесун 2013 çулта Чăваш Енри чукун çулсене аталантарма 750 млн тенкĕлĕх инвестици хывнине пĕлтернĕ. Кăçал 680 млн тенкĕ ĕçе кĕртесшĕн. Хальхи вăхăтра Канашра тепĕр проект пурнăçа кĕрет: локомотив деповĕ çĕкленет. "Вăл никĕс предприяти пулĕ. Унта çĕнĕ технологисене хута ярĕç. Вун-вун ĕç вырăнĕ тăвăпăр. Объекта 400 млн тенкĕлĕх инвестици явăçтарнă ĕнтĕ", – тенĕ Анатолий Лесун.

Республика Пуçлăхĕ чукун çулсен ертÿлĕхне пĕрпĕринпе çыхăнса тухăçлă ĕçленĕшĕн тав тунă. "Эпир калаçса татăлни пĕтĕмпех пурнăçа кĕни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Раççейре тата Чăваш Енре пурăнакансене ырлăх кÿрессишĕн çыхăнăва çирĕплетсех пырăпăр!" – пĕтĕмлетнĕ М.Игнатьев.

Канашра вăл кивелсе çитнĕ пурăнмалли вырăнсенчен çĕнĕ çуртсене куçармалли программăпа килĕшÿллĕн тунă 65 хваттере кĕрекенсене уçăсем панă май иртнĕ савăнăçлă уява та хутшăннă. "Кунта Раççейĕн 187 гражданинĕ çĕнĕ пÿрт уявĕ килтерĕ. Пĕтĕмĕшле илсен çакă влаçăн мĕн пур шайри тытăмĕсем тухăçлă ĕçленине çирĕплетет!" – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

■ **В.НИКОЛАЕВ**

# Страховани рынокĕн аталанăвне тишкернĕ

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "МетЛайф" страховани компанийĕ" АХО президенчĕпе, Пурнăçа страхлакансен ассоциацийĕн президенчĕпе Александр Зарецкипе тĕл пулнă. Калаçура Чăваш Республикинче страховани рынокĕн аталанăвĕн малашлăхне тишкернĕ. Тĕл пулăва Чăваш Енĕн экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькинпа Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăннă.

Михаил Игнатьев пурнăçра кĕтмен пулăм тăтăш сиксе тухни, çавăн пек чухне страхлани çынсене вĕсен инкекĕнчен хÿтĕлеме, тăкаксене пĕчĕклетме май паракан тупăшлă мел пулнине палăртнă.

"Инкекре страховани тытăмĕ питĕ пулăшать, – тенĕ республика ертÿçи МетЛайф компание ĕçре ăнăçу суннă май. – Ку бизнесра яваплăх кирлĕ. Тепĕр чухне çак яваплăхран пăрăнма тăрăшакан компанисем тĕл пулаççĕ-ха".

Александр Зарецкий страховани компанийĕн тĕп тĕллевĕ страхтÿлевĕн тулли калăпăшне тавăрса парасси пулнипе килĕшнĕ. Вăл МетЛайф страховани компанийĕн историйĕпе, хăйсен клиенчĕсене сĕнекен страховани программисемпе паллаштарнă.

Тĕл пулура Чăваш Енре халăха страхлассин рынокĕ аван аталаннине, çапла тума пур енлĕн май туса панине çирĕплетнĕ.

**А.СТЕПНОВ.**

# Отставкăна – хăй ирĕкĕпе

Çĕнĕ Шупашкар хула депутачĕсем администраци пуçлăхĕ Александр Сироткин хăйне ĕçрен хăтарма ыйтса çырнине тивĕçтернĕ. Вăл химиксемпе гидростроительсен хулин ертÿçинче икĕ çул ытларах тăрăшнă.

Депутатсен пухăвĕ çав кунах Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Марина Александровна Соловьевăна шаннă. Вăл унччен хула пуçлăхĕн çумĕнче, вĕренÿ управленийĕн ертÿçинче ĕçленĕ.

**Ю.ПЕТРОВ.**

КРИМИНАЛ

# Вăрă мелĕсем – çĕнĕрен те çĕнĕ

***Ямăттине хапсăнакансен ăсне-чеелĕхне ăмсанма та пулать. Ют пурлăха хăйсен тумашкăн мĕнле кăна мел шухăшласа кăлармаççĕ!***

Полици Шупашкарти лавккасенчен хаклă телефонсем вăрлакансене шырать. Видеосăнав камерисем вĕсене ÿкерсе юлнă, шурă тĕслĕ хэтчбек йышши автомобильпе çÿреççĕ пулас. Вĕсем пирки пĕлекенсене шалти ĕçсен органĕсене шăнкăравлама сĕнеççĕ.

Чеескерсем çапларах схемăпа ĕçлеççĕ. Лавккана ахаль туянакансем пек кĕнĕ май кĕсье телефонĕсен хаклă пĕр-пĕр моделĕпе кăсăкланаççĕ, ăна кăтартма ыйтаççĕ. Телефона тĕпченĕ май сутуçă асăрхаман вăхăтра чăн телефона унăн çавăн йышши муляжĕпе улăштараççĕ. Паллах, телефон туянмасăрах тухса каяççĕ. Шупашкарта пулнă тăватă тĕслĕхре лавккасен ĕçченĕсем хăйсене шăнман пăр çине лартса хăварнине самай вăхăт иртсен тин ăнланса илнĕ. Çавна май преступниксен йĕрĕ çине те тÿрех ÿкме май килмен-ха.

Тĕп хулари Ленин комсомолĕн ураменчи суту-илÿ çуртĕнчен яппаласем вăрлама тăнă çамрăксем те шыравра. Кăçхине, 21 сехет тĕлнелле, 4 каччă спорт тумтирĕн пайĕнчен 4 мăшăр кроссовки тата джемпер илсе тухасшăн пулнă. Çав яппаласене фольгаллă сумкăна чикнĕ – çапла майпа касса патĕнчен иртнĕ çĕрте вырнаçтарнă ятарлă хатĕр тавара "асăрхамĕ", сигнал памĕ тенĕ ĕнтĕ.

Анчах лавкка ĕçченĕсем сыхă пулнă, касса патĕнчен иртме ĕлкĕрнĕскерсем тĕлĕшпе иккĕленÿ çуралнă май вĕсем вăрăсене тытса чарма тăнă. Шел те, тытайман, çамрăксем сумкине пăрахсах тарнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

# Хушма субсиди илнĕ

Госслужба занятости Чувашии

***Сусăрсене ĕçе вырнаçтарма инфратытăм хатĕрлеме Чăваш Ен федераци бюджетĕнчен 3,1 млн тенкĕ ытла хушма субсиди илнĕ.***



Чăваш Республикин патшалăх Ĕçлев службин ертÿçи С.Димитриев пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Ен Пуçлăхĕ М.Игнатьев тата федерацин Ĕç тата ĕçлев службин ертÿçи В.Вуколов алă пусса çирĕплетнĕ килĕшÿпе çак укçа авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче килнĕ. Унпа сусăрсене вĕсем валли ятарласа хатĕрленĕ вырăнсене ĕçе вырнаçтарма усă курма палăртнă.

2014 çулта Чăваш Республикинче сусăрсен ĕçе вырнаçма пулăшма 10,7 млн тенкĕ уйăрнă. 2013 çулта – пĕтĕмпе те 6,8 млн тенкĕ.

Кÿмепе çÿрекен сусăрсем валли ĕç вырăнĕсем хатĕрлекен тата вĕсене ĕçе илекенсем валли хушма субсидисем уйăрма палăртаççĕ. Унăн виçи 1 млн тенкĕпе танлашĕ. Çак укçапа пандуссем, икĕ шайлă карлăксем вырнаçтарма, алăка пысăклатма, тивĕçлĕ санитарипе гигиена условийĕсене тума, сусăрсен автомашинисене лартма ятарлă вырăнсем уйăрма т.ыт.те усă курма юрать.

# Тутарпа чăваш ят-сумне çĕклекен ентеш

***Пархатарлă та вышкайсăр пуян шăпа Хусанти Н.Э.Бауман ячĕллĕ ветеринари медицина академийĕн професcорĕн, Пĕтĕм тĕнчери аграри пĕлĕвĕн тата информатизаци академийĕсен чăн академикĕн И.Н.Никитинăн.***



***• Иван Никитин академика 80 çулхи юбилей ячĕпе саламланă Анатолий Князевпа /сылтăмри/ Фатих Сибагатуллин /сулахайри/.***

Иван Николаевич 1934 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Вăрăмхăва ялĕнче колхозниксен çемйинче çут тĕнчене килнĕ. Николай Лукитичпа Агафья Максимовнăн нумай ачаллă çемйинче Ваня Володьăпа Саша хыççăн виççĕмĕш ывăл пулнă. Вĕсем хыççăн Мишăпа Гена, Тоньăпа Оля çуралнă.

Мĕн пĕчĕкрен нимĕнле хура ĕçрен те хăраман арçын ача 1943 çул пуçламăшĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен йывăр аманса таврăннă ашшĕ хистенипе тăхăр çул тултаричченех хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче тăван колхозăн уй-хирне тухать. Малтанхи вăхăтра лашапа шыв турттарать, унтан йĕтем çине кĕлте леçнĕ. Çапла майпа Ваня ялти пуçламăш шкула пĕтеричченех килти выльăх-чĕрлĕхе, уйрăмах лашасене юратса ӳснĕ.

Миçе пин çухрăм çурран çӳреме тивмен пулĕ тата çĕр-шывĕпе чапа тухнă пулас ăсчахăн нушаллă çамрăклăхра. Вăл вун виçĕ çулта чухнех çичĕ ача амăшĕ сарăмсăр вилет, ашшĕ – иккĕмĕш ушкăнри вăрçă инвалиҫĕ.

Вăрăмхăва ĕлĕкрех Кĕçĕн Пăла юхан шывĕ хĕрринчи Патреккел ялĕнчен мещенсен Пăва хули çывăхне куçса ларнă пĕчĕк хутор шутланнă. Кăçалхи çĕртме уйăхĕнче 1927 çултанпа Елчĕк районне кĕрекен 100 ытларах киллĕ Вăрăмхăва пуçланса кайнăранпа 200 çул çитнине анлăн паллă турĕç.

Чăваш Республикин картти çине те тимлĕрех тинкерсен çак чăваш ялĕ Тутарстанри Пăва районĕн территорийĕнче хăйне евĕрлĕ утрав пек лаптăк йышăннине асăрхатпăр. Ун тавра тутарсем пурăнакан ялсене куратпăр. 6-7 çухрăм кăнтăр еннерех вара 1920 çулсенчен пуçласах Пăва районне кĕрекен, ĕлĕк-авалтанпах пирĕн йăхташсем пурăнакан чăн-чăн чăваш салисем Рункă тата Кипекасси.

Совет саманиччен Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕнĕ Пăвапа кунтан 30 çухрăм ытларах вырнаçнă Елчĕк хутлăхĕнчи чи пысăк та шĕкĕр ял – Лаш Таяпа. Кунта 1840 çултах чиркӳпе прихут шкулĕ уçăлнă. Эпĕ ас тăвасса 1950-1960 çулсенче Лаш Таяпари вăтам шкулта таврари çирĕме яхăн ялпа поселокри 500 ытла ача вĕреннĕ. Вĕсене ун чухне нимĕнле йывăрлăх та хăратман. Тăван тавралăха, авалхи чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕркине мĕн пĕчĕкрен юратса ӳснĕ ачасем аслисем хистемесĕрех çывăхри тутар ялĕсенче вĕренесшĕн пулпирĕн ентеше çак аслă шкултах ĕçлеме хăварасшăн пулнă. Анчах та Аслă Пăлапа Хырла юхан шывĕсен хутлăхĕнчи ирĕклĕ уй-хирпе пĕчĕк хутăш вăрмансен ытамĕнче çитĕннĕ ăслă, пултаруллă, пысăк тавра курăмлă вăйлă каччă вĕсене аякри пĕр-пĕр районта, тен, пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ветеринар тухтăрĕнче ĕçлеме кăмăл пуррине сăпайлăн пĕлтернĕ. Çавăн хыççăн ректор пирĕн ентеше çапларах хуравланă:

– Иккĕмĕш çул ĕнтĕ Иркутск облаç ĕçтăвкомĕ пирĕн институтран вĕренсе тухнă 7-8 специалиста Байкал кӳлли çывăхĕнчи пысăк колхоз-совхозсене ĕçлеме ямашкăн ыйтать. Иккĕленместĕп: унти ĕç сире килĕшмелле. Ĕçлесе ман, 13-15 çултах аякри Лаш Таяпана çул такăрлатнă. Вĕсен хушшинче – Рункă ялĕнче çуралса ӳснĕ Чăваш халăх художникĕ Николай Енилин /Неççе Кули/, Кипекассинчен тухнă паллă çыравçă, фольклорист тата тавра пĕлӳçĕ Валентин Максимов /Валем Ахун/, Вăрăмхăвари пирвайхи профессор Иван Никитин тата ытти сумлă та пархатарлă ентешсем.

> ✓ ХĂЙĔН ĔÇНЕ ЧĂВАШ КАЧЧИ МАЛТАНХИ КУНРАН ПУÇЛАСАХ ÇĔР-ШЫВРИ ПАЛЛĂ ĂСЧАХСЕМ ПУРНĂÇА КĔРТСЕ ПЫНĂ ÇĔНĔРЕН ТЕ ÇĔНĔ НАУКА НИКĔСĔ ÇИНЧЕ ЙĔРКЕЛЕМЕ ТĂРĂШНĂ.

Иван Николаевич 1958 çулта Хусанти Н.Э.Бауман ячĕллĕ ветеринари институтне хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ. Ăна тарăн пĕлӳ панă хăш-пĕр профессорпа ректор пăхăр-ха Çĕпĕрте темиçе çул, Иван Николаевич. Эпир вара сирĕн çинчен манмастпăр, тен, 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех каялла института чĕнсе илĕпĕр...

1958 çулхи кĕркунне пуçламăшĕнче ĕнер кăна хăйĕн çуралнă кунне паллă тунă 24 çулти Иван Никитина Тайшет районĕнчи ветеринари лабораторийĕн директорне çирĕплетнĕ. Хăйĕн ĕçне чăваш каччи малтанхи кунран пуçласах çĕр-шыври паллă ăсчахсем пурнăçа кĕртсе пынă çĕнĕрен те çĕнĕ наука никĕсĕ çинче йĕркелеме тăрăшнă. 2-3 çултанах Тайшет районĕнче выльăх-чĕрлĕх вилесси кăна мар, чирлесси те хăвăрт чакнă. 1962 çулта Иван Никитина Иркутск облаçĕн ĕçтăвкомне чĕнтернĕ те регионти ял хуçалăх управленийĕн ветеринари пайĕн пуçлăхне çирĕплетнĕ.

Çичĕ çул ĕçлесе пурăннă Иван Николаевич аякри Çĕпĕрте. Тайшетра вăл кунти район библиотекинче ĕçленĕ вырăс пикипе Антонинăпа паллашса çемье çавăрнă. 1962 çул вĕçĕнче вĕсен Иркутскра Хусан федераци университечĕн физика факультечĕн пулас доценчĕ, Сергей Никитин профессор çут тĕнчене килнĕ. Нихăçан манăçми тарăн та ырă йĕр хăварнă Çĕпĕрти илемлĕ тулли пурнăç пирĕн ентеш çемйинче.

1965 çул варринче СССР Ял хуçалăх министерстви Иркутск облаçĕнче ĕçлесе ырă ят-сума тивĕçнĕ Иван Николаевича хăй аслă пĕлӳ илнĕ авалхи института ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Н.Э.Бауман ячĕллĕ аслă шкулта виçĕ çул ĕçлеме ĕлкĕрнĕ И.Никитин доцента 1968 çултах институтăн партком секретарьне суйланă. Çав вăхăтрах Лаш Таяпари вăтам шкултах тĕрлĕ общество ĕçне чыслăн пурнăçлама тăрăшнă Иван Николаевич çĕр-шывра пуçласа çавăн евĕрлĕ профильлĕ институтра ветеринари ĕçĕн экономикипе организаци кафедрине йĕркелеме мехел çитерет. 1976 çулта вăл хăйĕн пĕрремĕш монографи-учебникне «Организация и экономика ветеринарного дела» ятпа пичетлесе кăларнă. Çавăн хыççăн Иван Николаевич СССР Ял хуçалăх министерствин ветеринари Тĕп управленийĕн /1993 çултанпа Раççей министерствин уйрăм Департаменчĕ/ хушăвĕпе килĕшӳллĕн çĕр-шыври вун-вун аслă шкулта лекци вуланă, Пĕтĕм Союзри тĕрлĕ симпозиумпа конференцире 100 ытла доклад тунă. Иртнĕ ĕмĕр вĕçнерех И.Н.Никитин академика Канадăра, Болгарире, Беларуçра, Венгрире, Молдавире, Арменире тата ытти çĕр-шывра ирттернĕ вун-вун конференципе форумра сăмах калама, тĕнчери чи паллă ăсчахсемпе тĕл пулма чĕннĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр ытларах каялла Н.Э.Бауман ячĕллĕ ветеринари институтĕнче /1995 çултанпа Хусанти ветеринари медицина академийĕ/ Никитин профессорăн шкулĕ йĕркеленсе çитрĕ. Çак вăхăтра Иван Николаевичăн çирĕп алли витĕр тухнă 60 çын ветеринари, биологи, экономика тата ял хуçалăх ăслăлăхĕсен докторĕн тата кандидачĕн диссертацине хӳтĕленĕ. Вĕсен хушшинче – Чăваш ял хуçалăх академийĕн ректорĕнче 20 çул вăй хунă Николай Кириллов, çак аслă шкулăн профессорĕсем Федор Петрянкин, Геннадий Мартынов, Виталий Лабинов, Николай Косяев, Владимир Кузнецов, Патăрьел районĕнчен тухнă ăслăлăх докторĕсем Минсеит Сафинпа Расых Юсупов тата унăн аслă хĕрĕ Галия Юсупова, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи Тутарстан Республикин ял хуçалăх министрĕ, Раççей Федераци Патшалăх Канашĕн Думин депутачĕ Фатих Сибагатуллин, 2001 çултанпа Хусанти ветеринари медицина академийĕн ректорĕ Галимзян Кабиров тата Атăлпа Урал тăрăхĕнчи ытти паллă ăсчахсемпе çĕр-шыври ял хуçалăхĕпе экономика аталанăвĕн тытăмĕн ертӳçисем.

Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ ята иккĕмĕш тивĕçнĕ Г.Н.Волков академик-этнограф хыççăн тĕнче шайне çĕкленнĕ Елчĕк районĕнчен тухнă академик ахальтен мар ĕнтĕ хăйĕн 80 çулхи юбилейне Хусан ипподромĕн хăтлă та чи капăр залĕнче ирттерчĕ. Çак савăнăçлă каçа унăн пархатарлă вĕренекенĕ, ветеринари академийĕн ректорĕ Г.Ф.Кабиров профессор ертсе пычĕ. Галимзян Фазылзянович хăйĕн сăмахĕнче хăнасене Иван Николаевичпа унăн тăванĕсемпе, тата сумлă вĕренекенĕсемпе паллаштарнă хыççăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумне А.П.Князева сăмах пачĕ. Анатолий Пантелеймонович Хусанта çур ĕмĕр ытла пурăнакан мухтавлă ентеше ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп хучĕпе хаклă парне панă май унăн çĕр-шыври халăх хуçалăхĕн аталанăвне тӳпине вышкайсăр пысăк тӳпе хунине палăртнипе пĕрлех Иван Николаевич хăйĕн пĕтĕм чунĕпе яланах Чăваш Енре пулнине, унăн çутă пуласлăхĕшĕн малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хатĕрри çинчен каларĕ.

– Манăн аттепе, Елчĕк районĕнчи Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă «Слава» колхозра тăрăшса республикăра чи малтан «Чăваш АССР ветеринарин тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ Пантелеймон Николаевич Князевпа пĕрле Иван Никитин Лаш Таяпари шкулта та, Хусанти Бауман ячĕллĕ институтра та пĕрле вĕреннĕ. Вĕсем ĕмĕрлĕхех туссем пулнишĕн мăнаçланатăп эпĕ. Тепĕр савăнăç – пирĕн республикăри вĕренӳ заведенийĕсемпе агропромышленноç комплексĕнче Иван Николаевичăн çĕр-çĕр вĕренекенĕ тăрăшса вăй хуни. Вĕсен ретĕнче профессорсемпе доцентсем кăна çирĕме яхăн, республика тата районсен ертӳçисем те пур. Сирĕнпе пĕтĕм Чăваш Енпе Тутарстан мухтанать. Тавтапуç сире, Иван Николаевич! – вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ, Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Князев.

■ **Петр СИДОРОВ**

# Баржа сăмсипе ăшăхри газ пăрăхне тăрăннă

Авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче, ирхи 3 сехет иртсен, 850 тонна хăйăр тиенĕ баржа Атăл çинче, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шульгин ялĕ çумĕнче, инкеке лекнĕ: сăмси ăшăх вырăнти газ пăрăхне тăрăннă. Баржăна туртса хăпарнă "Земцов энергетик" буксирăн 6 çынран тăракан экипажĕ суранланман. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕчкей ялĕ патĕнчен Çĕнĕ Шупашкара çитме çула тухнă, çыранран 50 метрта пынă.

"Буксир хуçи – Шупашкарти юхан шыв порчĕ, – пĕлтерчĕ ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин надзор пайĕн ертӳçи Татьяна Куликова. – Федерацин "Çĕр айĕнчи чĕр таварсем" саккуннне пăхăнманшăн иртнĕ уйăхра предприятирен Шупашкар тата Куйбышев шыв управĕсенчен чĕр тавар кăларма панă 6 лицензие туртса илтĕмĕр. Çапла вара портăн ăна Атăл тĕпĕнчен кăларма юрамасть. Министерство специалисчĕсем усал хыпара пĕлсенех вырăна çитсе баржа çинчи хăйăра шывран хăсан уçланине палăртрĕç".

Предприятин авăн уйăхĕччен Атăл çинче, ГЭСран аяларах, шывран уçлама ирĕк паракан 3 лицензи пулнă. Министерство пурин вăйне те чарса лартнă. Предприяти авăн уйăхĕн 9-10-мĕшĕсенче йĕркене пăснă тесе шухăшлаççĕ. Порт директорĕ баржа инкеке лекнĕ кун Кĕчкей çывăхĕнчен "Нерудстром" общество хăйăрне кăларса палăртнă вырăна леçме килĕшнĕ тесе тӳрре тухма хăтланать. Анчах порт çак общество хăйăрне кӳме унпа килĕшӳ çирĕплетмен. Хăшĕ тĕрĕс калать? Ыйтăва право йĕркине сыхлакан органсем хуравлĕç. Ăна тĕпчеме пуçланă ĕнтĕ. Пăтăрмахлă ку ĕç-хĕле Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тĕплĕ сăнаса тăрать.

■ **С.СЕРЕГИН**

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ***

**Чăваш Республикинче 2015 çула К.В.Иванов çулталăкĕ тесе пĕлтересси çинчен**

Илемлĕ чăваш литературин классикне Константин Васильевич Иванова, Тăван çĕр-шыв тата тĕнче культурине питĕ пысăк тӳпе хывнăскере, тата унăн пултарулăх еткерне ĕмĕр-ĕмĕр асра тытма тата 2015 çулта вăл çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикинче 2015 çула К.В.Иванов çулталăкĕ тесе пĕлтерес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттерес енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитетне туса хумалла, унăн йышне çирĕплетмелле;

Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттермелли тĕп мероприятисен планне хатĕрлесе çирĕплетмелле.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, йĕркелӳпе право формине тата харпăрлăх формисене пăхмасăр организацисене Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттерме хастар хутшăнмашкăн сĕнес.

4. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин**
**Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çурла, 4, 110 №.

# Çыравçă ĕмĕтпе çунатлă



***Тинех!***

***Раççей Президенчĕ В.Путин 2015 çула Литература çулталăкĕ, республика Пуçлăхĕ М.Игнатьев Константин Иванов çулĕ тесе йышăннине илтсен, пытармастăп, чунăмра тӳрех ăшă та ырă, çутă та кăмăллă пулса кайрĕ. Ара, чĕрĕк ĕмĕр пурăнатпăр-çке-ха эпир, унччен хамăра сумлă та хисеплĕ туйнă çыравçăсем, темĕнле манăçа юлнă пек утрав çинче – нишлĕ, чун хавалĕсĕр, хӳтлĕхсĕр тăрса юлнăскерсем. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенчи çĕнелӳ тапхăрĕн «прорабĕсемпе» хăш-пĕр çыравçă та.***

«Мĕн чухлĕ ирĕклĕх кирлĕ, çавăн чухлĕ илĕр» тенипе усă курса – е республика Президенчĕн, е тĕрлĕ шайри депутат пуканне йышăнассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртма тытăнчĕç. «Пукан» тенĕрен, çыравçă пуканĕпе кăна çырлахасшăн пулмарĕ хăшпĕри: вĕсене председатель пуканĕ те шутсăр кирлĕ пулчĕ. Пуçланчĕ вара союз хыççăн союз «ĕрчесси» – Юхма союзĕ, Агивер союзĕ, Профессионал-çыравçăсен союзĕ... Вырăсла çыракансем те союзлă пуласшăнччĕ – хевти çитмерĕ курăнать. Республикăн пĕрремĕш Президенчĕ аптраса ӳкрĕ пулас: хăшне патшалăх енчен пулăшмалла? Хăшне штат тытса тăма, пĕр-пĕр çурт уйăрса пама укçа-тенкĕ уйăрмалла? Инкеке тата творчество пĕрлешĕвĕсем общество организацийĕсем çеç тесе йышăнчĕç те пултарулăх союзĕсем çине пачах алă сулчĕç. Пирĕнпе юнашар вырнаçнă республикăсенче апла тумарĕç, Тутар тата Пушкăрт республикисен пуçлăхĕсем М.Шаймиевпа М.Рахимов хăйсен çыравçисене татăклăнах татса каларĕç: патшалăх енчен пулăшма пăрахмастпăр, анчах пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнăр, пĕр союзра пулăр. Марипе Мордва республикисенче те çаплах пулчĕ. Курăр, ав, паян та патшалăх пулăшăвне лайăх туйса тăраççĕ вĕсем, пенси çумне республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕ те уйăрса параççĕ, журналсен редакцийĕсем тата кĕнеке издательствисем пирĕннинчен чылай ытларах гонорар тӳлеççĕ. Тутарпа Пушкăрт республикисенче Патшалăх премийĕн лауреачĕсене çур миллион тенкĕ укçа парса хавхалантараççĕ, пирĕн çак виçе 75 пин тенкĕпе танлашать. Унти халăх поэчĕсен ĕçĕсене пысăка хурса асăннă республикăсенче çичшер томлă çырнисен пуххине кăларса параççĕ, уйăхра вунă пин тенкĕ пулăшу пособийĕ тӳлеççĕ.

«Вĕсемпе танлашма йывăр», вĕсен унта çут çанталăк пуянлăхĕ – нефтьпе газ пур», – теççĕ пире çакăн пирки сăмах тапратсан. Пур пулĕ. Анчах писательсен чунпа шăратса кăларнă хайлавĕсем те пысăк пуянлăх мар-и вара?

Вилĕмсĕр Константин Иванов патнех таврăнар-ха. 1960 çулта поэт çуралнăранпа 70 çул çитнине Мускавра мĕнлерех уявлани çинчен Петĕр Хусанкай çырса кăтартни аса килет.

«...Икĕ сехет ытла пынă Иванов касĕ хупăнсан хăй ĕмĕрĕнче рăшман-ши унăн таса чунне, вĕри чĕрине, хăюллă шухăшне?..»

Çапла, Константин Ивановăн çӳллĕ те сӳнми çăлтăрĕ пирĕншĕн, чăвашсемшĕн, Пушкин çăлтăрĕ вырăссемшĕн, Шекспир çăлтăрĕ акăлчансемшĕн, Шевченко çăлтăрĕ украинсемшĕн, Руставели çăлтăрĕ грузинсемшĕн, Салават Юлаев çăлтăрĕ пушкăртсемшĕн, Тукай çăлтăрĕ тутарсемшĕн шутсăр хаклă та асамлă пулнă пекех. Çавăнпах ĕнтĕ Иванов çулталăкне иккĕмĕш хут /пĕрремĕшне 1990 çулта ЮНЕСКО шайĕнче пĕтĕм тĕнчипе палăртнăччĕ/ ирттерни вăхăтлă та вырăнлă. Ан тив, ăна пĕтĕм чăваш тĕнчи тивĕçлипе уявлатăр.

**АНЧАХ ВЫРĂНТИ ВЛАÇСЕН ÇЫРАВÇĂСЕМ ÇИНЕ ÇАВРĂНСА ПĂХМАЛЛАХ. КИЛЕС ÇУЛХИ БЮДЖЕТА ÇИРĔПЛЕТНĔ ЧУХНЕ ХАÇАТ-ЖУРНАЛ РЕДАКЦИЙĔСЕНЕ, ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛЬСТВИНЕ УКÇА-ТЕНКĔПЕ ПУЛĂШМА ТИВĔÇЛИ КУÇ КĔРЕТЕХ**

ăна-кăна пайтах ас тивнĕ пĕр чăваш манран çапла ыйтрĕ: «Нарспи» пулман пулсан мĕн курнă пулăттăмăр-ши эпир?» – терĕ. Эпĕ сасартăк ним калама аптраса тăтăм. Мускавран Шупашкара çити тăтăшах çав ыйтăва аса илсе пытăм. Чăнах та, камăн чунне çĕклемен пуль икĕ хура шăрça пек хура куçлă, çăмăл ал-уραллă, ахăлтатса кулакан çирĕп хĕр Нарспи? Мĕнле поэт, драматург, композитор, художник парăмлă мар-ши ун умĕнче? Мĕнле тĕпчевçĕ ăнланса илесшĕн тă-

Калама йывăр, пĕтĕм Раççей шайĕпе мĕнле те пулин çăмăллăхсем пулĕç-ши çыравçăсем валли, пулмĕç-ши? Паянхи çыравçă хăйĕн ĕçĕсемшĕн илекен гонорар чи пĕчĕк виçерен те сахалрах пулни йĕркеллĕ япала мар. Хисеплемелле турă пана талантпа тăван халăха савăнтарма, унăн чун-чĕре ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултаракан поэт-писательсене, драматургсемпе тишкерӳçĕсене.

Патшалăх тытăмĕсемсĕр пуçне тăван литературăна малалла ăнăçлă аталантарма лайăх ăнтарса ĕçлекен бизнесменсем, предпринимательсем, Шупашкарти тата ытти хулари паллă завод-фабрикăсем, ял хуçалăх предприятийĕсем пулăшни те шутсăр вырăнлă пулĕччĕ. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх Н.Ф.Угаслов, В.Н.Гордеев паллă строительство управленийĕсен пуçлăхĕсем писательсене тăтăшах пулăшса тăраççĕ-ха. Республикăра пирĕн çĕр-шывĕпех паллă «Акконд», «Элара», «Химпром» тата ытти вун-вун предприяти те пур-çке-ха. Вĕсем те пĕр-пĕр литература номинацийĕпе тӳлевлĕ тĕрлĕ конкурс ирттерме пултараççĕ-çке. Çавăнпа та çыравçăсен хăйсен те пуçаруллăрах пулмалла, литература çулталăкне мĕнлерех ирттерес пирки тивĕçлĕ инстанцисене сĕнӳсемпе тухмалла.

Шанатăп, патшалăх пирĕн ĕçе хисеплесе çитес çула Литература çулталăкĕ, К.В.Иванов çулталăкĕ ирттересси çинчен пĕлтерчĕ пулсан пирĕн пурнăçра ырă улшăнусем пулаççех. Пирĕн таса тивĕç вара – халăха паха произведенисемпе савăнтарасси.

Сăмахăма вара «Поэт тусăмсене» сăввăмпа вĕçлем.

*Туссем, ан вăрçăр,*
*çĕр хитре те аслă,*
*Пĕрре кăна пурнатпăр*
*тĕнчере.*
*Пыл хурчĕсем пек пулăр*
*пин-пин саслă,*
*Çапах та килĕштерĕр*
*çемьере.*

*Туссемĕр, ан вĕтелĕр,*
*ан вакланăр,*
*Пĕр-пĕринчен ыйтсамăр*
*çирĕпрех.*
*Хавхалану килет пулсассăн –*
*тарлăр,*
*Вут-çулăмра çунтарăр чĕрĕре.*

*Амаланать пулсан хĕлхем-и,*
*вут-и? –*
*Çунма ан хăрăр, итлĕр*
*кăмăла,*
*Ан тив, чунра йăл! хыпнă*
*шалти çутă,*
*Çул кăтартса, шав чĕнтĕр*
*малалла.*

*Туссем, ан вăрçăр,*
*çĕр хитре те аслă,*
*Илем харкашупа килĕшес çук.*
*Хавас çук чух пулма пĕлер*
*хаваслă,*
*Кулма вăй çитерер*
*куляннă чух.*

■ **Порфирий АФАНАСЬЕВ,**
**Чăваш халăх поэчĕ,**
**Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ**

## *Анатолий КУЗЬМИН:*

# «Республика пурлăхĕ çулленех тупăш кӳрет»

***ЧР Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин тивĕçĕ – çĕр лаптăкĕсемпе, куçман пурлăхпа усă курассине тухăçлă йĕркелесси, республика хыснине налук шутланман тупăш ытларах хывтарасси, нумай ачаллă çемьесене çĕрпе тӳлевсĕр тивĕçтересси. Ведомство ку тĕллеве мĕнле пурнăçлать-ха? Анатолий Кузьмин министр хуравлать.***



● *А.Кузьмин министр /сылтăмран иккĕмĕшĕ/ çĕр ыйтăвĕпе калаçу ирттерет.*

✓ ÇУЛТАЛĂК ПУÇЛАННĂРАНПА ЧР БЮДЖЕТНЕ КУÇМАН ПУРЛĂХПА ÇĔРЕ ТАРА ПАРСА – 129,8 МЛН, ВĂЛ ШУТРА ЧĂВАШ ЕН ПУРЛĂХНЕ ТАРА ПАРСА – 48,2 МЛН, РЕСПУБЛИКА ХАРПĂРЛĂХĔНЧИ ÇĔР ЛАПТĂКĔСЕНЕ ТАРА ПАРСА 81,6 МЛН ТЕНКĔ ĔÇЛЕСЕ ИЛТĔМĔР

**– Патшалăхпа муниципалитет пурлăхĕпе усă курассине йĕркелесе пынăран Чăваш Енĕн пĕрлехи бюджетне услам мĕн чухлĕ кĕчĕ?**

– Кăçалхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне – 1,1 млрд тенкĕ ытла, – терĕ Анатолий Иванович.

**– Хыснана мĕнле тупăш ытларах пуянлатать?**

– Патшалăх харпăрлăхĕнчи куçман пурлăха тата çĕр лаптăкĕсене тара панинчен куçарттаракан тӳлев. Унăн тӳпи – налук шутланман мĕн пур тупăшăн 44,6%, республика харпăрлăхĕнчи çĕре сутса тунă укçа тӳпи – 17%. Çулталăк пуçланнăранпа ЧР бюджетне куçман пурлăхпа çĕре тара парса – 129,8 млн, вăл шутра Чăваш Ен пурлăхне тара парса – 48,2 млн, республика харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсене тара парса 81,6 млн тенкĕ ĕçлесе илтĕмĕр.

**– Патшалăх харпăрлăхĕнчи çурт-йĕре укçа-тенкĕ çаврăнăшне нумайрах явăçтарсан хыснана кĕмĕл ытларах кĕресси паллă. Анчах ку тĕллеве ăнăçлă пурнăçласси ЧР пурлăхне туллин шута илнинчен нумай килет…**

– Ку тĕлĕшпе министерство Чăваш Ен пурлăхĕн реестрне туса хатĕрленĕ. Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне унта юридицин 426 сăпатне, куçман пурлăхăн 11 пин ытла объектне, çĕрĕн 2676 лаптăкне /21720 гектар/ шута илнĕ. Регистрацилеттерекен куçман пурлăх объекчĕ йышлансах пырать. Кăçалхи кăрлач-çурла уйăхĕсенче вăл 556 хушăннă.

**– ЧР çĕр фончĕ мĕнле лаптăксенчен тăрать? Хуçисем ыйтманни мĕн чухлĕ?**

– Фондра 1834,5 пин гектар çĕр. Унăн 55% – ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ. Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ пĕрлехи харпăрлăхри çĕрĕн харпăрлăх правине 337,3 пин гектар /республикăри пай çĕрĕсен 62%/ тĕлĕшпе шута илтернĕ. Ку енĕпе Шăмăршă, Елчĕк, Канаш, Тăвай, Пăрачкав районĕсен кăтартăвĕ лайăх.

Хуçисем ыйтман шута илнĕ пайсем 337,3 пин гектар /мĕн пур пайăн 43%/ йышăнаççĕ. Хальлĕхе муниципалитет йĕркеленĕвĕсен харпăрлăхне 82,7 пин гектар куçарнă. Çак ĕçе Канаш, Елчĕк, Комсомольски, Шăмăршă районĕсенче лайăххах пурнăçлаççĕ.

**– Çурт-йĕр çавăрман çĕр лаптăкĕсен информаци ресурсĕнче паян миçе пушă лаптăк çинчен пĕлме пулать?**

– 186. Вĕсем 532 гектар йышăнаççĕ. 77 лаптăк – тупăша перекетлĕ тытакан çемьесем валли пурăнмалли вырăн тума, 109-шĕ – промышленноç паркĕ, технопарк, бизнес инкубаторĕ, производствăн ытти объекчĕ хăпартма. Хальлĕхе информацин пĕрлехи ресурсĕнчи 29 çĕр лаптăкне хаклашу йĕркелесе сутнă.

**– Ялсен таврашĕнчи пушă выртакан лаптăксене шута илес ĕç пырать. "Халăх инвентаризацийĕнчен" усă пур-и?**

– Республика Пуçлăхĕ килес икĕ çулта вĕсене пĕтĕмпех шута илме, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ертсе пынипе саккунпа килĕшӳллĕн йĕркелеме хушрĕ. Паянхи кун тĕлне – 1548, вăл шутра муниципалитет харпăрлăхĕнче – 30, уйрăм çын харпăрлăхĕнче – 661, патшалăх харпăрлăхĕн шутне кĕртменни 661 лаптăк пушă выртнине çирĕплетнĕ. Инвентаризациленĕ тапхăрта уссăр выртаканнисене информацин пĕрлехи ресурсне кĕртĕпĕр. Вĕсене хуçалăх ĕçне, социаллă ыйтусене татса пама явăçтарăпăр.

**– Нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕпе еплерех тивĕçтеретĕр?**

– Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна тӳлевсĕр пама черете 4810 çемьене тăратнă. 2620-шĕ /54%/ илнĕ. Нумай ачаллисен ыйтăвне Улатăр, Пăрачкав, Шăмăршă районĕсенче татса панă. Канаш, Куславкка, Комсомольски, Етĕрне районĕсенче ĕç начар мар пырать: çемьесен 75% тивĕçтернĕ. Шел те, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле хулисен 25% та çук.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

# Калавçăсен конкурсĕ

***Еврази çыравçисен пĕрлĕхĕ /ертӳлĕхĕ Турцире вырнаçнă/ кăçалхипе виççĕмĕш хут калав çыракансен Пĕтĕм тĕнчери Кашкар Махмучĕ ячĕллĕ конкурсне ирттерет. Кашкар Махмучĕ /1028-1126/ – тĕрĕксен паллă ăсчахĕ, «Тĕрĕк сăмахĕсен пуххин» авторĕ. Конкурс тĕллевĕ – тĕрĕк халăхĕсен литературине аталантарасси, пултаруллă çыравçăсене хавхалантарасси, тĕнчене тухма пулăшасси. Ун теми ирĕклĕ. Малтан кашни чĕлхепе çырнă хайлавсене уйрăммăн пĕтĕмлетеççĕ, каярах – тĕнче шайĕнче.***

Кăçалтан Тĕрĕк тĕнчин конкурсне чăваш çыравçисем пуçласа хутшăнаççĕ.

Калавсене тӳрелĕхе /жюрие/ 2014 çулхи авăнăн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр çитермелле. Адресĕ: 428023, Чăваш Республики, Шупашкар хули, 23-мĕш почта урамĕ, 41-мĕш абонент ешчĕкĕ /кĕскен: Шупашкар-23, 41-мĕш аб. ешчĕкĕ/. Ыйтса пĕлмелли телефон: 89613487389. E-mail: cuvas@turk.net.

Халĕччен ниçта та пичетленмен тата ăмăртусенче çĕнтермен ал çырăвĕсене çеç йышăнаççĕ.

Кашни çыравçă ăмăртăва пĕр е икĕ калавпа хутшăнма пултарать.

Калав калăпăшĕпе пĕр пин сăмахран кая, вунă пин сăмахран ытла пулмалла мар.

Калава 5 паллăран тăракан шифрпа паллă тумалла. Ун авторĕ кам пулнине кирек мĕнле майпа систерекен хайлава конкурсран сиреççĕ.

Калавçăн хăйĕн паспорчĕн ĕмĕлкине /копине/, пурăнакан вырăнне кăтартнине /адресне/, биографине, сăн ӳкерчĕкне çыру кипкине /конвертa/ хумалла, ун çине калав шифрне çырса, ăна калавпа пĕрлех пысăкрах çыру кипкине вырнаçтарса тӳрелĕхе ярса памалла.

Ал çырăва 12-мĕш калăпăшлă сас паллисемпе /шрифтпа/ çаптарса тӳрелĕхе 6 экземпляр тăратмалла. Çыру кипкинче калавăн WORD форматпа çаптарнă электрон варианчĕ те пулмалла.

Ал çырусене каялла памаççĕ, ăмăртăва хутшăнни хăех çыравçă çак условие йышăннине пĕлтерет.

Конкурсра çĕнтернĕ калавсемпе çыхăннă мĕн пур правасем Еврази çыравçисен пĕрлĕхĕн пулса тăраççĕ, ăмăртăва хутшăнни хăех çыравçă çак условие йышăннине пĕлтерет.

Суйласа илнĕ калавсене йĕркелӳçĕсем автортан ирĕк ыйтмасăрах хăйсене кирлĕ пек усă курма пултараççĕ, ăмăртăва хутшăнни хăех çыравçă çак условие йышăннине пĕлтерет.

Жюри членĕсем тата вĕсен çывăх çыннисем конкурса хутшăнаймаççĕ.

Чăваш çыравçисен конкурсĕн пĕтĕмлетĕвĕпе 2014 çулхи чӳкĕн 1-мĕшĕнче паллаштараççĕ.

Чăваш çыравçисен конкурсĕн çĕнтерӳçисене 2014 çулхи чӳкре чыслаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери конкурса 2014 çулхи чӳкре пĕтĕмлетеççĕ.

Тĕнче çĕнтерӳçисене 2014 çулхи раштавра Бакура /Азербайджан/ чыслаççĕ.

Çĕнтерӳçĕсене 1-мĕш вырăншăн – 1000, 2-мĕш вырăншăн – 750, 3-мĕш вырăншăн 500 Турци лири парса хавхалантараççĕ. Йĕркелӳçĕсем хушма хавхалантару майĕсене те палăртма пултараççĕ.

Тĕнче çĕнтерӳçисене 1-мĕш вырăншăн – 10000, 2-мĕш вырăншăн – 7500, 3-мĕш вырăншăн 5000 Турци лири парса хавхалантараççĕ. Хушма хавхалантару парни – 2500 Турци лири.

Çĕнтерӳçĕсене чысламалли укçатенке Турци Республики правительствин пуçлăхĕн паллаштару фончĕ уйăрать. Йĕркелӳçĕсем хушма хавхалантару парнисем уйăрас шухăшлисене хăйсемпе çыхăнма йыхравлаççĕ.

Конкурса Чăваш Енре ирттерме тӳрелĕх йĕркеленĕ. Унăн ертӳçи – филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, ЧР Профессионал писательсен пĕрлĕхĕн правленийĕн тата «Тăван Атăл» журнал редколлегийĕн членĕ Виталий Родионов.

■ **И.АРСЕНТЬЕВ**

# Шупашкар «Кулибинсене» кĕтет

***Промышленноç валли йывăр трактор туса кăларакан тĕп хуламăрта кăçалхипе тăваттăмĕш хут "XXI ĕмĕрти Кулибин" конкурс йĕркелеççĕ. Мероприятие çулленех Раççейри машина тăвакансен кунне /кăçал вăл авăнăн 28-мĕшĕнче пулать/ халаллаççĕ.***

Авăнăн 19-26-мĕшĕсенче Трактор историйĕн музейĕнче иртекен IV слета хамăр республикăсăр пуçне Мари Элрен, Чул хула облаçĕнчен ăстасем килеççĕ. Конкурсра çитĕннисемпе пĕрлех Шупашкарти механика-технологи техникумĕнче вĕренекенсем хăйсен кăсăк хатĕрлевĕпе паллаштараççĕ.

Паянхи куна Шупашкар, Муркаш, Елчĕк, Элĕк, Вăрнар, Канаш районĕсенчи вун-вун изобретатель хутшăнма кăмăл пуррине пĕлтернĕ.

Тупăшу Пĕтĕм Раççейри "Раççейри машиностроительсен пĕрлĕхĕ" общество организацийĕ, "Трактор завочĕсем" концерн тата патшалăх учрежденийĕсемпе ведомствăсем пуçарнипе иртет. Тĕллевĕ – изобретательсемпе рационализаторсене, инженерсемпе техниксене тата рабочисене хăйсен çĕнĕ ăслайĕпе, рационализатор сĕнĕвĕпе машинăсем тăвас отраслĕн çивĕч ыйтăвĕсене татса пама явăçтарасси.

Конкурс 2 номинаципе иртет: трактор техники, çакса çӳремелли хатĕр.

Çĕнтерӳçĕсене Дипломпа укçа парса хавхалантараççĕ. Техникăна хӳтĕлемелли патент пулсан хушма преми те кĕтет. Хăйсем тĕллĕн пуçтарнă чи лайăх техника тĕслĕхĕсене Трактор историйĕн музейĕнче кăтартĕç.

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

# НКВД тустарнă ял

***"Хыпарăн" 1992 çулхи çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнчи номерĕнче манăн "Улатăрти вил тăприсем" статья кун çути курчĕ. Вăл – 1937-1938 çулсенче Комсомольски районĕнчи Нĕркеç ялĕнчи айăпсăр 16 çынна "революцие хирĕçле ушкăнра тăрса совет влаçне, колхоза сăтăр тунăшăн" репрессилени çинчен.***

Пичетленсенех ĕç пӳлĕмне Нĕркеçре çуралса ӳснĕ Петр Таллеров тавра пĕлӳçĕ кĕрсе тăчĕ. "Аттене арестленĕ хыççăн ăçта хупса усранине, унăн пурнăçĕ ăçта вĕçленнине аппапа иксĕмĕр "Хыпарта" çырса кăтартичченех пĕлмесĕр пурăнтăмăр, – терĕ Петр Пантелеймонович. – Тавах сана!"

Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн /НКВДăн/ Патăрьел пайĕн оперуполномоченнăйĕсем ашшĕне тытса кайнă чух вăл 7 уйăхра кăна пулнă. 1950 çулсенче çемье пуçĕ ăçтине амăшĕнчен пĕрре çеç мар ыйтнă. Лешĕ нимех те калайман. Ывăлĕ влаç органĕсен ячĕпе çыру янă. Шупашкар ЗАГСĕ çемьене Пантелеймон Феофанович Таллеров ĕçлесе юсанмалли колонире /ячĕ, чăн та, илемлĕ/ 1944 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче вилнине пĕлтернĕ. Амăшĕ те, ачисем те хăрушă çак хыпара ĕненмен. 1952 çулта СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн председателĕ К.Е.Ворошилов патне çыру çитернĕ. Темиçе уйăхран Нĕркеçе П.Ф.Таллеров /1906 çулта çуралнă/ айăплав вăхăтне колонире иртернине, ăна çемьепе çыру çӳретме чарнине хыпарланă.

Никита Хрущев 1956 çулта партин XX съездĕнче И.Сталин кульчĕ çинчен доклад тунă хыççăн салтакри Петĕр каллех ашшĕне шыраттарать. Хальхинче тивĕçлĕ орган ăна панă хуравра П.Ф.Таллеров чĕрĕ е вилнĕ пирки пĕр сăмах та пулман. Таса ятне 1956 çулта тавăрнине çеç палăртнă. Аппăшĕпе шăллĕ ашшĕне НКВДăн Улатăр районĕнчи пайĕнче /халĕ "Электроприбор" АУО картишĕ/ 1937 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче персе вĕлернине съезд пулнăранпа 36 çул иртсен пĕлчĕç. Çав кунах Улатăрта Нĕркеçри Павел Антипович Антипов /1904/, Петр Федорович Морозов /1905/, Гаврил Гаврилович Грачев /1905/, 1938 çулхи нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕнче Алексей Антипович Антипов пурнăçне татнă. Вĕсен ачисем те ашшĕне завод территорийĕнче персе пăрахнине "Хыпарта" статья тухнă хыççăн кăна пĕлнĕ. Унччен патшалăхăн хăрушсăрлăх комитечĕ чăнлăха пытарнă.

Улатăрта çухалнисене чавса чикнĕ вырăна тупса палăртас, вĕсен юлашкине шăтăкран кăларса Улатăр масарне пытарас ыйтăва ывăлĕ-хĕрĕ 1990-2000 çулсенче тĕрлĕ шайра час-часах çĕкленĕ. Ку ĕçе П.Таллеров тавра пĕлӳçĕ ертсе пынă. Ыйтăва Улатăр хула администрацийĕ, влаçăн ытти тытăмĕ умне лартнă. Анчах ăна çийĕнчех татса паман, укçапа çыхăнăран синкерлĕ ĕçе 17 çула тăснă. "Эпир атте вил тăпри ăçтине пĕлесшĕн. Унăн юлашкине чавса кăларса масара этем евĕр пытарма пулăшăр?" – ыйтнă ывăлĕ-хĕрĕ.

**2009 çулхи çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа çурла уйăхĕн 17-мĕшĕччен завод территорийĕнче 1937-1938 çулсенче персе вĕлернисене чавса чикнĕ виçĕ вырăна шыраса тупнă. Малтан вĕсем ăçтараххине никам та пĕлмен. Шăтăксен тĕлне НКВД документчĕсенче те кăтартман-çке. Пĕрремĕшне алтнă: тĕпĕнчен нимĕн те тухман. Иккĕмĕшĕнче этем шăммисем курăннă. Унтан – 33, виççĕмĕшĕнчен – 35, тăваттăмĕшĕнчен – 50, пурĕ 118 çын шăммине кăларнă. Кашни шăтăк тарăнăшĕ – 2,5, сарлакăшĕ-урлăшĕ 3х3 метр.**

Улатăр, Патăрьел, Йĕпреç, Комсомольски, Пăрачкав, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенчен тытса килнисене, вăл шутра Нĕркеçсене, пуç кутпашкинчен, ĕнсерен çӳлерех, пистолетран пенĕ. Шăмăсемпе пĕрле шăтăксенчен çĕрĕшнĕ тумтир татăкĕсĕкĕпе çăпатасем, чĕлĕмсем, йывăç кашăксем тухнă. Чул хулари эксперт-криминал центрĕ Йĕпреç районĕнчи Хурамал ялĕнче 1882 çулта çуралнă, 1937 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче персе вĕлернĕ Илья Измайлович Измайлов пачăшкă юлашкине тĕпчесе палăртнă. НКВД пайĕнче 4 священник пурнăçне татнă.

**И.Сталин тĕрминче пĕтернĕ 118 çын юлашкине тупăкпа 2010 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче Улатăр масарĕнче хурлăхлă митинг ирттерсе пытарчĕç.** Вĕсен çывăх çыннисем, тăванĕсем, Улатăр халăхĕ айăпсăррисен таса ятне аса илсе тупăк умĕнче пуç тайрĕç, çынсене вĕлерсе хăрушă преступлени тунисене Турăран каçарма ыйтрĕç. Шел те, вĕсен юлашкине завод территорийĕнчен кăларса хула масарне тирпейлесе пытарас ыйтăва нумай çул çĕкленĕ Петр Таллеров ашшĕн тупăкĕ умĕнче тăраймарĕ, шăтăка тăпра яраймарĕ. 73 çулти ветеран çав çулхи çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлчĕ. Политика репрессийĕсене пула НКВД пайĕнче шар курнисене, Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн Улатăр районĕнчи Первомайски поселокĕнчи ĕçлесе юсанмалли колонийĕнче асаплан вилнисене 2011 çулхи юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче хула масарĕнче асăнса мемориал комплексĕ уçма хутшăнаймарĕ. Ăна тутарассишĕн Улатăрти Çветтуй турă амăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Владимир Теплов протоиерей нумай тăрăшнине палăртмалла. Персе вĕлернисен ятне, хушаматне, ашшĕ ятне мрамор хăма çине туллин çырнă. Стелăна спонсорсен укçипе тунă. Ун умне çуллен, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче, политика репрессийĕсенче шар курнисене асăнмалли кун, чĕрĕ чечексем хураççĕ.

**НКВДĂН УЛАТĂРТИ ПАЙĔНЧЕ /ХАЛĔ – «ЭЛЕКТРОПРИБОР» ОБЩЕСТВО КАРТИШĔ/ 118 ÇЫННА ПЕРСЕ ВĔЛЕРНĔ**

1930-1950 çулсенче Первомайскинчи колонире 15 пин çынна ирĕксĕрлесе тытнă. Унта республикăри районсенчен кăна мар, ытти регионтан, çав шутра Мускавран, тĕп хула облаçĕнчен, Молдовăран йышлăн янă. Ытларахăшне уголовлă кодексăн политика статйисемпе сăлтавсăр айăпланă. Вĕсене вăрман кастарнă, строительство материалĕ, сĕтел-пукан, пушăт-мунчала, кулек хатĕрлекен цехсене ĕçлеттернĕ. 1941-1942 çулсенчи хĕлле çĕр-çĕр çын шăнса вилнĕ. Вĕсене колоние юнашар лаптăкра пысăк шăтăксем чавса пытарнă. Кунта уголовлă йĕркепе айăпланисем те "кирпĕч шутланă".

"Тамăкра" чĕрĕ юлнисем 1990 çулсенче, уççăнлăх тапхăрĕ пуçлансан, вăрăпа тĕрмене лекнисем "совет влаçне хирĕçле агитаци тунă, ушкăнсем йĕркеленĕ" тесе уголовлă кодексăн ун чухнехи 58-мĕш статйипе явап тыттарнисенчен мăшкăлланине аса илетчĕç. Колоние преступленисене, чире, ытти сăлтава пула миçе çын пурнăçĕ татăлнине никам та тĕрĕс пĕлмест.

1937-1938 çулсенче репресси "чулĕ" айне мĕнле сăлтавсене пула лекнĕ-ха? "Облаçсенчен, крайсенчен, республикăсенчен çурçĕре тата çĕпĕре ссылкăна янă, унта пурăнмалли вăхăчĕ тухнă хыççăн каярахпа хăйсем пурăннă вырăнсене таврăннă кулаксем, совет влаçне хирĕçле преступлени тунисенчен ытларахăшĕ халăха пăтратаççĕ, çав-çавах совет влаçне хирĕçле ĕç тăваççĕ, – тесе çырнă ВКП/б/ Тĕп Комитечĕн секретарĕ И.Сталин 1937 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче СССР шалти ĕçсен халăх комиссарне /НКВД/ Н.Ежова. – Çакă колхозсемпе совхозсенче, транспортпа промышленноç отраслĕнче, ытти çĕрте яр уççăн палăрать. ВКП/б/ Тĕп Комитечĕн, партин облаçсен, крайсен комитечĕсен секретарĕсен, НКВДăн облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи представителĕсен çуралнă е ссылкăччен пурăннă вырăнсене таврăннă кулаксене, судпа айăпланисене, тăшман ушкăнĕсенче тăракансене пĕр тăхтаса тăмасăр арестлес тата "тройкăсем" вĕсем тĕлĕшпе административлă ĕç хатĕрлесе персе вĕлерес тĕллевпе пурне те шута илмелле. Ытлашши хăрушă мар ĕç тунă тăшман ушкăнĕсене те списока кĕртмелле. НКВД кăтартăвĕсене тĕпе хурса пурне те ятарлă районсене ямалла. "Тройкăсем" камсене персе вĕлерме тата ссылкăна яма йышăннине ВКП/б/ Тĕп Комитетне 5 кунра пĕлтермелле".

Çак çыру хыççăнах репресси "арманĕн" çунатти кăлтăр-кăлтăр çаврăнма тытăннă. Н.Ежов вырăнти НКВДсене çынсене арестлесе пĕр пайне персе пăрахма, тепĕрне лагерьсене яма хушнă. Регионсенче тытса хупма палăртнисен списокне хайхи "тройка" /унта партин регион секретарьне, прокурорне, НКВД комиссарне/ çирĕплетнĕ. Пирĕн республикăри обком секретарĕ С.П.Петров /каярахпа хăй те репрессие лекнĕ/ ертсе пынă. **Списокри "кулаксене, совет влаçне хирĕçле ĕç тунисене" икĕ ушкăна пайланă. Пĕрремĕшне "тăшманла хăрушă ушкăнсене" кĕртнĕ. Нĕркеçсенчен ку йышра 5-ĕн. "Тройкăсем" ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăнах персе вĕлернĕ. Иккĕмĕш ушкăнра – "ытлашши хăрушă мар тăшмансем". Нĕркеçрен списока 11 çынна кĕртнĕ. Иккĕмĕш ушкăнрисене 8-10 çула ĕçлесе юсанмалли лагерьсене янă. Чăваш Енре 300 çынна персе вĕлерме, 1500 çынна лагерьсене яма йышăннă.**

НКВД 1937 çулхи çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче "ĕçе" пикеннĕ. Шупашкарпа Улатăр пайĕсенче 600 ытла çынна персе вĕлернĕ. Тĕп хулара пурнăçне татнисене çĕрле Б.Хмельницкий урамĕнчи масара ăсатнă, шăтăка пăрахса çиелтен çӳхен тăпрапа витнĕ /иртен-çӳрен ан асăрхатăр тенĕ/, списокри мĕн пур хушамат тĕлне çекĕлленĕ пулин те шăтăксене хуплани хыççăн вил тăпри çине хĕрес лартман. Кунта чавса чикнисен çывăх çыннисем Шупашкарта политика репрессийĕ иртернине хаçатсенче 1990 çулсен пуçламăшĕнче çырса кăтартиччен пĕлмесĕрех пурăннă. 1930-1940 çулсенче шар курнисен общество организацийĕ вĕсен вил тăприне шыраса тупассишĕн нумай тăрăшрĕ. Анчах усси пулмарĕ. Масар варрине палăк лартрĕç. Çывăх çыннисем çуллен, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче, пухăнса асăнаççĕ.



● *Улатăрти мемориал комплексĕ умне чĕрĕ чечексем хураççĕ.*

"Тройка" "кулаксен революцие хирĕçле ушкăнĕнче тăнă" П.Ф.Таллерова, А.А. тата П.А.Антиповсене, П.Ф.Морозова, Г.Г.Грачева "совет влаçне, колхоза сăтăр тунăшăн" айăпланă. Анчах патшалăх айăплавçи вĕсем çав ушкăнра тăнине, хуçалăха сиен кӳнине кĕнтелемсен чăнлăхпа килĕшсе тăракан сăмахне тĕпе хурса çирĕплетсе парайман.

Нĕркеçри Е.С.Можаева, А.Д.Беляева, И.Ф.Таллерова, Н.Г.Герасимова, Ф.Е.Морозова, А.П.Котова, Е.Е.Волкова, Ф.П.Порядкова, И.В. тата А.В.Кудрявцевсене, Н.Ф.Таллеровăна "революцие, Шмидт ячĕллĕ колхоза хирĕçле ĕç тунăшăн, ял çыннисен хушшинче совет влаçне хирĕçле агитациленĕшĕн" 10 çула колоние яма йышăннă. Вĕсем йывăр ĕçлесе, выçăпа аптраса нуша нумай курнă, сывлăхсăр юнăран вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

П.Ф. тата И.Ф.Таллеровсене, Н.Герасимова, А.Беляева, И.Кудрявцева, Е.Волкова, П.Антипова колхоз витине, Н.Павлов килне вут чĕртнĕ тесе уголовлă кодексăн тепĕр статйипе явап тыттарнă. Вĕсем уголовлă преступлени тунине никам та курман. Следователь ку айăплава та çынсен çирĕп сăмахĕпе çирĕплетеймен. Айăплав пĕтĕмлетĕвне ял Канашĕн председателĕпе секретарĕн, колхоз председателĕпе счетоводĕн следователе панă кăтартăвĕсене, вĕсем айăпланакансем пирки çырнă характеристикăсене тĕпе хурса хатĕрленĕ. Вун ултă çынран пĕри те хăйсем тĕлĕшпе çырнă айăплава йышăнман, кĕнтелемсен кăтартăвĕсене хирĕçленĕ.

**Н.Хрущев влаçа килсен, 1950 çулсен варринче, патшалăхăн хăрушсăрлăх комитечĕ Нĕркеçсен уголовлă ĕçне тепĕр хут тĕпченĕ. 1937-1938 çулсенче Улатăрта персе вĕлернисене, 10 çула колоние янисене айăплама явăçтарнă кĕнтелемсем пурте "Нĕркеçре 1930 çулсенче совет влаçне хирĕçле кулаксен ушкăнĕ йĕркеленине пĕлместпĕр", "18 çул каялла П. тата И.Таллеровсем, Н.Герасимов, П.Морозов, И.Кудрявцев, Е.Волков, А.Беляев, А.Антипов ял активисчĕсене вĕлерессипе хăратнă, Антипов колхоз витине тата Павлов çуртне вут чĕртме хатĕрленнĕ тени чăнлăхпа килĕшсе тăмасть" тенĕ. Следователь "революцие хирĕçле ушкăн совет влаçне, колхоза сăтăр тунине çирĕплетекен тĕслĕхсем" тупса палăртайман. Суд вун ултă çыннăн таса ятне тавăрнă.**

Шар курнисене НКВДăн республикăри халăх комиссариатĕнчен хушнипе Патăрьел оперуполномоченнăйĕсемпе следователĕсем уголовлă кодексăн 58-мĕш статйине тивĕçтерекен суя айăплав хатĕрленĕ. Шупашкарти "тройка" районсенчен çитернĕ ĕçсене пăхса е персе вĕлерме, е колоние яма йышăннă. Нĕркеçри вун-вун ачана ашшĕсĕр, кил-çурта çемье пуçĕсĕр хăварнă. Пĕтĕм йывăрлăх амăшĕсем çине тиеннĕ. Вĕсене "халăх тăшманĕсен" йышне кĕртнĕ, колхоз ĕçĕнчен, ял-йыш пурнăçĕнчен пăрнă, ачасене "кулаксем, совет влаçне хирĕçле элементсем" тесе хĕртнĕ.

Синкер çулсенче ялти 5 çынна харăсах персе вĕлерни, 11 çынна 10 çула колоние янă тĕслĕх сахал Чăваш Енре. Республикипе çĕр-çĕр çын лагерьсен тĕп управленийĕн /ГУЛАГ/ колонийĕнче, ятарлă ссылкăра терт-асап тӳснĕ, нумайăшĕ тăван ял-хулана таврăнайман.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

# «Геройсем мирлĕ пурнăçра та пулаççĕ...»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Ун пек самантсем мĕн чухлĕ пулман-ши! Пĕррехинче тата Швеци çынни ыйтусемпе халтан ячĕ. "Эсир мĕн, ЦРУ-ран килнĕ-им?" – терĕм акăлчанла. Хайхискер хăй те ăнкарса юлмасăр: "Çапла", – терĕ. Кайран ытлашши персе янине ăнланчĕ пулас та "библиотекăра ĕçлетĕп" текелесе тӳрре тухма хăтланчĕ.

Вун-вун ĕçлĕ делегаци, çĕр-çĕр турист – Ачаксем никама та сиввĕн кĕтсе илмен. Людмила Андреевнăшăн, ют чĕлхесен вĕрентекенĕшĕн вара акăлчан, нимĕç хăнисемпе тĕл пулма кăмăллă та, кăсăклă та пулнă: капла практика пуянланнă-çке. Шкул ачисем те ют çĕр-шывран килекенсене курма хавас пулнă.

Аркадий Павлович хăнасемпе тĕл пулмассерен производствăна мала яма, халăх пурнăçне лайăхлатма усăллă опытпа паллашса юласшăн çуннă. Нихăçан та мул пухас ĕмĕт хыççăн хăваламанскер тĕрлĕ çĕр-шывсен тан марлăхне шута илсе: "Америкăра пурăннă тăк эпĕ тахçанах миллионерччĕ", – тенĕ.

Ял варринчех, сăнавпа производство хуçалăхĕн кантурĕнчен аякра та мар, Аркадий Павлович пуçарăвĕпе чĕртнĕ парк ешерет. Чăрăш, юман, хурăн... – тĕрлĕ йывăç кунта. Николай Ашмарин ăсчаха асăнса лартнă вун çичĕ юман – уйрăмах хаклисем.

–Ах, йĕрке тумалла-ха. Унсăрăн Аркаша каçармĕ. Хăй пурăннă чухне кашни хунавшăн пăшăрханатчĕ. Хăш-пĕр юманĕ хăрнăччĕ те – мăнукăмпа Витьăпа çĕннисем килсе лартрĕç, – мăшăрĕн тăсăмне йывăççенче те курать Людмила Андреевна.

## Лаша витинче тĕл пулнă "ылтăн пĕрчĕкĕ"

...Тури Ачак хĕрĕсем яла çĕнĕ парторг ĕçлеме килни çинчен илтнĕ. 14 çулти Людăн хăлхине те кĕнĕ ку хыпар. Пĕр кунхине çамрăк специалист лаша витинче тăрмашаканскерсем патне çитнĕ. Кĕрнеклĕ çӳллĕ хĕр тăрăшса ĕçленине асăрханă та – пуçĕнче шухăш мĕлтлетнĕ: "Манăн пулать ку." Паллах, шкул ачи иккенне пĕлсен хĕр ачан пуçне çавăрас тĕллев пулма та пултарайман. Вăхăт çеç тахçан мĕлтлетнĕ шухăша шăп та 10 çултан чăнлăха çавăрнă.

– Бригадăна ĕçлеме тухаттăмăр. Хĕрсенчен çивĕч çава илетчĕ те çулатчĕ вара. Манăн атте пулман ун чухне – çави те çапларах кăна касатчĕ. "Пирĕннипе çултарасчĕ сана," – шухăшлаттăм ăшра. Ăна председателе суйлани асра. Ун чухне тăххăрмĕш класа Хучаш шкулне, пилĕк çухрăмра вырнаçнăскере, çӳреттĕмĕр. Уроксем хыççăн таврăннă чухне тантăшсемпе калаçса килетпĕр. "Айдакран пиçмест", – теççĕ. "Унран пулатех",– тупăшрăмăр эпир юлташпа, – аса илӳ çăмхине малаллах сӳтет çиччĕмĕш теçетке çула çывхаракан хĕрарăм.

Виçĕ çултан, вун пĕрмĕш класран вĕренсе тухнă чухне, Люда патшалăх сочиненине ирĕклĕ темăпа çырма тĕв тăвать. "Манăн юратнă герой" – çапла пулнă шухăшлав текстĕн ячĕ. Никам пирки те мар, мал утăмсем тăвакан пултаруллă Аркадий Айдак çинчен хайлать ăна хĕр. /Çак статья ячĕ – сочиненири пĕрремĕш предложенирен/. Ертӳçĕ качча ăна вăрттăн туйăмпа килĕштернĕрен мар, чăнласах паттăр вырăнне хунăран. Çакăн çинчен Аркадие шкул директорĕ çийĕнчех пĕлтернинчен тĕлĕнмелли çук. Йĕкĕт хăйне нимĕн пулман пекех тытнинчен вара... Тепĕр икĕ çул иртсен тин куç хывнă хĕре хăй кăмăлланине систерет вăл.

– Шкул хыççăн вĕренме кайма хатĕрленетĕп. Справка илмешкĕн правлени çуртне пытăм. Аркадий Павлович ялтах юлма сĕнет, кунтах аван ĕçлесе илме пулни çинчен калать. Эпĕ вара професси илсе ĕçе вырнаçмалли, пирĕн çĕнĕ пӳрт лартмалли çинчен ăнлантаратăп. Шел, ун чухне конкурс пысăк пулчĕ – института вĕренме кĕреймерĕм. Пĕр хушă ялтах ĕçлесе пурăнтăм. Пĕррехинче килти ватă ĕнене пуснă та – асаннепе хулана аш сутма




кайрăмăр. Часах таврăнаймарăмăр. Пирĕнпе темĕн сиксе тухман-ши тесе пăшăрханма тытăннă иккен Аркадий. Аннерен ыйтнă. Вăл ăна çав тери хисеплетчĕ. Анне те, асанне те кĕрĕвне юрататчĕç. Эпир вĕсем мĕн çĕре кĕричченех пĕр килте туслă пурăнтăмăр, – чĕререн тухаççĕ Л. Айдак сăмахĕсем.

Тăватă çул килĕштерсе çӳренĕ Аркадипе Людмила. Пĕрлешиччен каччăн савнă хĕрне амăшĕпе курнăçтарас килнĕ. Пĕрре çапла Шупашкарти пединститутра вĕренекен студентка эрне вĕçĕнче яла колхоз специалисчĕсемпе пĕр машинăра ларса таврăннă. Çула май Айдак хăйĕн тăван килне Чурпая кĕрсе тухнă. "Типсе вилетпĕр, шыв ĕçтерĕр, тархасшăн", – ачисене ăша хывтарма тăрăшни куç кĕрет. Литературăна юратасси унран Аркадие те куçнă. Уолт Уитмен хайлавĕсем сĕтелçи кĕнеки пекехчĕ уншăн. Шарль де Костерăн "Легенда об Уленшпигеле" хайлавĕн хăш-пĕр сыпăкне пăхмасăр пĕлетчĕ. Мана çав кĕнекери юратнă сăнарĕ ячĕпе "манăн Неле" тетчĕ.

Телее, кĕнеке вулас, историпе, тĕнчери лару-тăрупа кăсăкланас туртăм пирĕн ачасенче те – пиллĕкĕн вĕсем – пур. Люция хĕрĕмĕрĕн ывăлĕ Витя, вĕсем тăван килте пурăнаççĕ те, кукашшĕпех вулама вĕренчĕ. Юрататчĕ мăшăрăм ачасене. Ас тăватăп: аслисем шкула та каймастчĕç-ха. Хайхискер шăпăрлансене малашне космоса пĕчĕк

> «ХĂÇАН ТА ПУЛИН "ÇАПĂÇУРИ" МАНĂН ЮЛТАШСЕМ: "АРКАДИЙ, ЭСĔ ÇАПАХ ТА ЯПĂХ МАР КĔРЕШРĔН, ХĂВĂН СУКМАКУПА ЧЫСЛĂН УТСА ТУХРĂН", – ТЕСЕН ÇАКĂ МАНШĂН ЧИ ПЫСĂК ТЕЛЕЙ ПУЛĔЧЧĔ...»

ыйтнă ертӳçĕрен ĕçтешĕсем. Çак сăлтавпа тухнă та председатель амăшĕ çынсем патне. Хĕрарăм картишне кĕрсен Аркадий пулас мăшăрĕ пирки унăн шухăш-кăмăлне пĕлесшĕн пулать. Нумай сăмах ваклама юратман Евдокия Лукинична ытарлăн: "Ылтăн пĕрчĕкне çĕре пăрахмаççĕ", - тесе калать.

Ума сарса хунă çырусенче мăшăрне "ылтăн пĕрчĕкĕм" тесе çырнă йĕркесене сахал мар тĕл пултăм. Акă еплерех хаклă пулнă иккен амăшĕн сăмахĕсем Аркадий Павловичшăн. Кун кĕнекисенче вара амăшне халалланă сыпăксем те чылай. Акă пĕринче вăл ăна революци юррисене вĕрентнĕшĕн тав тăвать. Хăйне çирĕп утăмсем тума шăпах вĕсем хистени-вĕрентнине палăртать.

– Евдокия Лукинична вырăс чĕлхипе литературин учителĕ пулнă, нумай вулатчĕ. /Вăл 90 çулччен пурăннă. – **Авт.**/. Кĕнекесенчи ăса вĕрентекен самантсене ĕнесем вĕçтерме пуçласси, космонавтсем вара хăйсем тĕллĕн суса ăшă сĕт ĕçесси çинчен юптарса парать. Пĕчĕкскерсем ашшĕне çăвар карса итлеççĕ. Çавсем валлиех "калаçакан" автан пирки тĕрлĕ путиш шухăшласа кăларатчĕ, – Людмила Андреевнăна итленĕçем Аркадий Павлович сăнарĕ куç умне туллинрех тухса пырать.

## Тĕнчери "чи пуян çын"

11 çулти Витя – кукашшĕн шанчăкĕ. Ахальтен мар хăй ларакан машинăна пăшалтан пенĕ хыççăн пурнăç пирки тарăн шухăша кайнă самантра Айдак мăнукĕн телефонĕ çине çапла çырса хăварать: "Ан кулян, аннеçĕм. Эпĕ вилсен – Витя юлать..." Пушă вăхăт тупăнсанах ăна килĕнче çитĕнекен мăнукĕпе ирттерме кăмăллани сисĕнет. Акă мĕнле аса илет пиллĕкмĕш класа çӳрекен арçын ача кукашшĕне:

– Унпа яланах кăсăклăччĕ. Куллен ирпе тата каçхине сивĕ шыва хамăр тăрăх ярса е юр çинче йăваланса ӳт-пĕве пиçĕхтереттĕмĕр. Хăй çут çанталăка еплерех илем кӳни, сыхлани çинчен каласа пама юрататчĕ. Ĕне çитерме пĕрле илсе çӳретчĕ. Шкула кайма тытăнсан нумай вулаттăмăр, задачăсем шутлаттăмăр. Вăл юнашар çуккине питĕ туятăп. Пурнăçра ун пек пулас тесен ырă кăмăллăх – чи кирли. Çынна пулăшма ӳркенмелле мар.

Люция Аркадьевна, амăшĕ çирĕплетнĕ тăрăх, – кăмăл енĕсемпе ашшĕне чи çывăххи, ун çинчен каласа памашкăн кирлĕ сăмахсем тупма та йывăррине палăртрĕ.

– Ача чухне хушăран ăна килте курмастăмăр та. Çапах унăн витĕмне хăй çук чухне те туяттăмăр. Килте нихăçан та сасă хăпартса курман. Апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен тиркешес, капăрлăх–пуянлăхшăн çунас йăла çукчĕ. Ялан таса та типтерлĕ çӳретчĕ. Хирте ыттисемпе тан утă, кăшман ани çинче тăрмашаттăмăр – пыратчĕ, май пур таран çемьепе пĕрле ĕçлетчĕ. Сăмса каçăртса нихăçан та çӳремен. Çуран тăк çуран, е юлан утпа уй-хире пăхса çаврăнатчĕ. Анне те маттур, ăслă пирĕн. Çапах пурнăçри тĕп вĕрентекен атте пулнă. Ун пекки миçе пин çынран пĕрре çуралнă-ши? – ашшĕн чунĕ кунтах иккенне халĕ те ĕненет çемьери иккĕмĕш "кайăк" Люция.

Сарăхнă хутсене тишкернĕ май этемĕн хăйне мĕнле тытмаллине уйрăм листа çине çырни тупăнчĕ. Пӳлĕмре туртма юраманни, усал сăмахпа калаçмалла марри, ыттисене итлеме пĕлмелли, кирек кама та ячĕпе ашшĕ ятне каласа чĕнмелли, кăнттам сăмахпа кӳрентересрен асăрханмалли... çинчен кашни "правилăна" çĕнĕ йĕркене вырнаçтарса шăрçаланă. Хитре сăмахпа усă курассишĕн "шăрçаланă" темерĕм: кунашкал илемлĕскерне каллиграфи почеркĕ теççĕ. Вăл кăна та марха: вырăсла-и, чăвашла-и – Аркадий Павловичăн кун кĕнекисенче орфографи, грамматика йăнăшĕ асăрхамарăм. Чăнчăн лирик пулнине систерекен йĕркесене вуласа савăнтăм: "Чӳрече умĕнче çерçисем чĕвĕлтетнине илтетĕп. Колхозниксемпе васкаса калаçакан бригадира илтетĕп. Çуркуннене илтетĕп..."

Хăйĕн ĕçне чун-чĕререн парăнса ĕçлекеншĕн пурнăçра чи хакли мĕн-ши? Акă Айдакăн хуравĕ: " Хăçан та пулин "çапăçури" манăн юлташсем: "Аркадий, эсĕ çапах та япăх мар кĕрешрĕн, хăвăн сукмакупа чыслăн утса тухрăн", – тесен çакă маншăн чи пысăк телей пулĕччĕ..." Çемье вара кунашкал паттăрсемшĕн пĕлтерĕшлĕ вырăнта мар тетĕр-и? Удмуртири санаторире каннă-сипленнĕ чухне мăшăрне янă çырури çак йĕркесем пач урăхла шухăша çирĕплетеççĕ: "... Манăн Люсенька пур тетĕп те – хама тĕнчери чи пуян çын пек туятăп."

Статья пуçламăшĕнчи эпиграфа кăларнă сăмахсене те хăй аякра чухне çырнă Аркадий Павлович. Шел, вĕсем халĕ Людмила Андреевнăн чĕринчен юратнă мăшăрĕн адресĕпе тухаççĕ, тунсăх куççулĕ кăлараççĕ. Çав вăхăтрах пурнăçра хĕрарăм телейне çавăн пек çынпа юнашар утса тупнишĕн хĕпĕртӳ туйăмĕ те çуратаççĕ.

– Аркадий виличчен темиçе çул маларах тăван ял-йыш валли çыру çырса хăварнă. Ăна малтан – коммерци банкĕнче, каярах – хăйĕн сейфĕнче упранă. Хăйĕн пурнăçне тивĕçлипе, совеç хушнă пек пурăнса ирттерме тăрăшни, яланах колхоз пуласлăхĕшĕн çунни çинчен каланă унта вăл. Çав вăхăтрах çемйи тĕлĕшпе тимлĕх сахалрах пулнишĕн хăйне ӳпкеленĕ. Хăйĕнпе инкек сиксе тухас тăк çывăх çыннисем йывăрлăха лексен ял-йыша пулăшма ыйтнă – вăхăтĕнче хăй те ырă ĕçсем тунине шута илсе. Палăк уçма килсен Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пирĕн çемьене мĕнпе пулăшмалла тесе ыйтрĕ те – çав çырăва аса илтĕм. Ырă чăнах та ырăпах таврăннине тепĕр хут ĕнентĕм, – вĕçлерĕ калаçăва Людмила Андреевна.

**Ирина ПУШКИНА**



*Пурнăçра яланах лайăххипе юнашар начарри, илемлин çумĕнче хитрех мар ӳкерчĕк тĕл пулать. "Хура-шурă курман çын пурнăç тытма пĕлмест", тенĕ ваттисем. Чăн та, пирĕн хурине вăхăтра асăрхама вĕренесчĕ. Вăл сахалрах пултăр, шурри çĕнтертĕр тесе тăрăшасчĕ. Çак тĕллевпех /ырри, лайăххи, чапли нумайрах пултăр тесе/ республикăри чи çамрăк хулана – Çĕнĕ Шупашкара – çитсе куртăмăр. Ăна суйланин тепĕр сăлтавĕ – химиксен хули кĕçех хăйĕн çуралнă кунне паллă тăвĕ. Еплерех хатĕрленеççĕ-ха ăна вĕсем? Мĕнле çĕнĕлĕх пур?*

# Пурнăç: Шурă тата Хура



● Çĕртме – çурла уйăхĕсенче хулан тĕп урамне /Винокуров урамĕ/ тĕппипех çĕнетрĕç: асфальт сарчĕç, чарăну вырăнĕсене çĕнĕлле хăтларĕç, çул айккипе симĕс тĕспе сăрланă тимĕр карта тытрĕç.



● Хула "чĕрин" – администраци çурчĕн айккинче каштансемпе сайра тĕл пулакан тĕрлĕ йывăç ката пекех ӳссе кайнăччĕ. Тинех вĕсене касса, иртсе тирпейлерĕç, курăк акрĕç. Илемлĕ халĕ!



● Авăнăн 20-мĕшĕнче уçăлакан çĕнĕ йышши футбол уйĕ тирпейлĕхĕпе, хăтлăхĕпе тыткăнлать. Ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕ çывăхĕнче вырнаçнăскере халь-халь чупса тухса мечĕк хăвалас килет... Ахальтен-им ăна хута яма 17 миллион тенкĕ тăкакланă. Раççейре паян çакнашкал 172 футбол уйĕ!



● Винокуров урамĕнчи 26-мĕш çуртра пурăнакансем чӳречерен чечексене пăхса киленеççĕ. Çурт çумĕнчи лаптăкра темĕн тĕрли те – сарри те, хĕрли те, кĕренни те – ешерет. Маттурсем!



● Промышленноç урамĕ шурлăха çаврăннă тейĕн, пулăçă аттисĕр кунта пырса та ан кĕр...



● Промышленноç урамĕнче вырнаçнă шиномонтаж клиентсене пĕрре те тараватлăн кĕтнĕн туйăнмарĕ: территори тирпейсĕр, ăпăр-тапăр йăваланать, чул куписем выртаççĕ.




● Ахаль те юхăннă хоккей курупкине вандалсем темĕн те пĕр çырса тата та нĕрсĕрлетеççĕ.



● Силикат урамĕнчи путăкшăтăк вара водительсене кăна мар, çуран çӳрекенсене те кăмăлсăрлантарать.




● Çуртсем çине çакнашкал пĕлтерӳсене те таксистсемех çыраççĕ /хулара чылай вырăнта асăрхарăмăр вĕсене/, те каллех çăмăлттай çамрăксен "ĕçĕ" ку...

**Çĕнĕ Шупашкарпа Роза ВЛАСОВĂПА Леонид МАХМУТОВ паллашнă**

*Кашни ял шăпи хăйне евĕр тата расна. Çав вăхăтрах пур ялăн та харпăр хăйĕн ахахĕ те, мерченĕ те пур. Нумаях пулмасть Вăрнар районĕнчи Кивĕ Сăрьелте пулса куртăм. Вырăсла та илемлĕ янăрать вăл: Троицкое! Ялĕ те сăнсăпачĕпе ятĕнчен пĕрре те кая мар. Пĕчĕк икĕ урамран кăна тăраканскер йăлт чечек ăшне "путнă". Ял хушшинче – сип-симĕс курăк. Тирпейлĕ те, хăтлă та кунта.*



# Ял хушшинче йĕтĕн çитĕнтернӗ,

## е Кивĕ Сăрьелте туслăх, пĕрлĕх туйăмĕ пĕтмен

Вăрнарти аш-какай комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче хуралта ĕçлекен Ольга Михайлова пĕлтернĕ тăрăх – Кивĕ Сăрьелте паян 55 килтен çирĕм саккăрăшĕнче кăна пурăнаççĕ. 27 çуртра мăрьерен тĕтĕм тухма пăрахнă. Ватăсем вилнĕ, çамрăксем хуласене тухса кайнă. Çапла майĕпен-майĕпен вăл пĕчĕк яла çаврăннă. Шел те, юлашки çулсенче Раççейре нумай-нумай ял пĕтсе пырать. 2002 çулхи çырав тăрăх 1989-2002 çулсенче 11 пин ял "вилнĕ". Çав вăхăтрах Чăваш Енре те çĕр питĕнчен çухалакансем пур. Хăшĕсем вара урама çаврăнаççĕ.

"Телее, пире пĕчĕк ял тесе пăрмарĕç, вунă çул каялла çут çанталăк газĕ кĕртсе пачĕç. Яла асфальт çул пырать. Кивĕ Шуртана Вăрнартан автобус та çӳрет, вăл пирĕн ял патĕнченех иртсе каять. Кивĕ Сăрьелте ытларах çамрăк /40 урлă каçнисене аслисен шутне кĕртес килмест/ çемьесем пурăнаççĕ. Тĕлĕнмелле те, анчах пирĕн ялта ватă çын сахал. Сакăр теçетке çула çывхараканни 4-5 çын кăна. Шел, 2005 çулта колхоз саланчĕ. Çавăнпа ялти вăй питти арçынсем Мускава ĕçлеме çӳреççĕ. Хĕрарăмсем выльăх-чĕрлĕх тытаççĕ. Ялĕпе паян 20 ĕне, 4 лаша. Çав вăхăтрах виçĕ ĕне усракан та пур. Хăш-пĕрин кил картинче ĕне те, качака та пур. Лашапа çуркунне çĕр улми лартатпăр, каярах купалатпăр, лавпа утта та каятпăр. Çăварнире çӳçеллĕ тутăр çыхса катаччи чупатпăр. Ялта лавкка та, уйрăм çын тытакан киоск та пур. Шел, ялти пуçламăш шкула 2002 çулта хупрĕç. Ачасене халĕ Туçи Çармăс шкулне автобус турттарать. Пĕлӳ çуртне ялтан пурĕ 13 ача çӳрет. Шкул çулне çитмен пепке пурĕ те виççĕ кăна. Медпункт алăкĕ çине те пысăк çăра çакнă. Кивĕ Шуртана çӳреме тивет. Клуб кивелнĕ пулин те пĕрех уçкалаççĕ-ха. Çамрăксем унта сĕтелçи теннисла выляма пултараççĕ. Яшсене салтака ăсатнă чухне те культура вучахне пухăнасси йăлара. Яшсемпе пикесем ташă каçĕсене кӳршĕ яла – Кивĕ Шуртана çӳреççĕ. Чылай ялта ĕçкĕç нумаййине пĕрре кăна мар илтнĕ, пирĕн патăмăрта ун пек мар. Ĕçсе, супса çапкаланса, ĕçмелли ыйтса çӳрекен çук. Арçынсем Раççейĕн тĕп хулинчен таврăнсан пĕр-ик кун хăналанкалаççĕ те çырлахаççĕ, мăшăрĕсене килти хуçалăхра пулăшаççĕ. Ватă хусахсем те çук пирĕн. Эпир пĕр-пĕринпе туслă пурăнатпăр. Пускилсемпе кăна мар, ялти мĕн пур çынпа килĕштеретпĕр. Ытти ялта ĕçкĕ-çике, туя тăвансене кăна чĕнеççĕ пулсан, эпир ĕлĕкхи пекех туйсене пурте пĕрле пухăнса кĕрлеттеретпĕр. Хĕр илме кайма та, хĕр хыççăн кайма та туй арăмĕсем пек тумланатпăр. Туй-çуя чăн чăвашла йĕркелетпĕр. Хăйматлăхсем тăватпăр, кайран пĕрле хутшăнса пурăнатпăр. Ялти çемьесем те пĕр-пĕринпе туслă çыхăну тытаççĕ. Салтак ăсатасси те манăçа тухман-ха пирĕн. Хĕсмете каякан йĕкĕте çынсем алă шăллисем çыхса яраççĕ, парне параççĕ. Урам хушшипе тутăр вĕçтерсе юрласа çӳрекен салтак ачисене кашни килех кĕртсе кăлараççĕ. Хĕрарăмсем алă ĕçĕ тума маçтăр. Хĕресле те, тултарса та, хăюпа та, вĕтĕ шăрçапа та тĕрлеççĕ. Тĕррисене картинăсем пек туса стенасем çине вырнаçтараççĕ. Хĕллехи вăрăм каçсенче вара çыхаççĕ те, çĕлеççĕ те. Ку çеç-и? Пирĕн яшсем те йĕппе çип тытма ӳркенмеççĕ. Сергейпа Димитрий Козловсем картинăсем хĕресле тĕрлеççĕ",– тĕлĕнтерет Ольга Николаевна.

2002 ÇУЛХИ ÇЫРАВ ТĂРĂХ 1989-2002 ÇУЛСЕНЧЕ 11 ПИН ЯЛ "ВИЛНĔ". ЧĂВАШ ЕНРЕ ТЕ ÇĔР ПИТĔНЧЕН ÇУХАЛАКАНСЕМ, УРАМА ÇАВРĂНАКАНСЕМ ПУР

Кивĕ Сăрьелсем илеме, хитрелĕхе, çут çанталăка юратаççĕ. Кашнин пахчинчех – хитре чечек. Ольга Михайловăн пахчи вара – чи пуянни. Халĕ гладиолуссемпе георгинсем, кĕл чечексемпе астрăсем, хризантемăсем тата ытти те çеçкереччĕ. Ял çыннисем пĕлтернĕ тăрăх – Кивĕ Сăрьел 15-16-мĕш ĕмĕрсенче пуçланса кайнă. Ăна Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчен куçса килнĕ чăвашсем никĕсленĕ. Анчах килĕшӳ-çураçу нумая пыман. Çĕр çитменнипе çапăçса кайнă та, пĕрисем урăх вырăна уйрăлса тухнă. Çапла çĕнĕ ял – Çĕнĕ Сăрьел никĕсленнĕ. Ваттисем каланă тăрăх – хуçалăх шучĕ кунта 55-рен ытла пулман. "Ун чухне çĕр çитмен çав, ял хушшине сухаласа йĕтĕн акатчĕç. Йĕтĕнтен кĕпе-йĕм тăватчĕç. Паянхи çамрăксем, ахăртнех, йĕтĕн епле çитĕннине те курман",– калаçăва хутшăнчĕ 81 çулти Герман Михайлов. Герман Михайлович хăй вăхăтĕнче строительство бригадин бригадирĕнче ĕçленĕ. Унăн ĕçне халĕ ывăлĕ Владислав малалла тăсать. Мăнукĕ Костя вара Шупашкарти строительство техникумĕнче вĕренет.

"Виçĕм çул Çимĕкре Ял кунне паллă турăмăр. Çимĕк – пирĕн питĕ пысăк праçник. Питрава уявламастпăр эпир. Масар çине таврари ялсем пек шăмат кун мар, Çимĕкре /Троицăра/ каятпăр. Шăмат кун вара вилнисене асăнатпăр. Вырсарни кун масар çинчен килсен хăна-вĕрле пухатпăр. Пĕр-пĕрин патне хăнана çӳретпĕр. Пĕр класра вĕреннисем тĕл пулусем йĕркелеççĕ",– пĕлтерет Ольга Михайлова. Шел, яла мĕншĕн Троицкое тенине пĕлекен пулмарĕ. "Ахăртнех, Çимĕк вăхăтĕнче йĕркеленнине кура Троицкое тенĕ",– вулатăп И.Дубановăн "Чăваш Республикинчи географи ячĕсем" кĕнекинче. "Çапах та, манăн шухăшăмпала, пирĕн яла пĕтекеннисен йышне кĕртмелле мар. Аталанасси иккĕленӳллĕ, анчах тытăнса тăратпăр-ха. Кам пĕлет, тен, пурнăç улшăнĕ те çамрăксем яла килсе пурăнас тейĕç. Халĕ ав, хуларан куçса килекенсем те пур. Вячеслав Степанов Канашран куçса килсе пысăк çурт лартрĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан яла килсе пурăнас текенсем те пур",– пытармарĕ Ольга Николаевна. Ольга Михайловăн çара кайма хатĕрленекен, яла, тăван тăрăха юратакан ывăлĕ Костя та, тен, Кивĕ Сăрьелĕнчех çемье çавăрса пурăнĕ? Çапла пулмалла та, ара вăл кĕçĕн ывăл-çке, тĕпкĕч...

Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши тутлă тенешкел Кивĕ Сăрьелсем килĕштерсе, шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. Никама та ӳпкелемеççĕ, ыранхи куна çутă малашлăхпа кĕтеççĕ. Пĕр-пĕрне хăйматлăх, кум туса пĕтернĕскерсем: "Ялта пурăнма пĕрре те кичем мар",– теççĕ. Тăван-хурăнташ патне кăна мар, кӳрше те, туссем патне те чĕнмесĕрех çӳреççĕ кунта.

**РОЗА ВЛАСОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем



● Ольга Михайлова.



● Герман Михайлов.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Окинава — вӑрӑм ӗмӗрлисен утравӗ

**Хӑш ҫӗр-шывра чи вӑрӑм ӗмӗрлӗ ҫынсем пурӑнаҫҫӗ?**

**С.ВАСИЛЬЕВ.**
Хӗрлӗ Чутай районӗ.



Японири Окинава утравӗ ҫинче 100 ҫултан иртнӗ пилӗк ҫӗре яхӑн ҫын пурӑнать. Е кунта кашни ҫӗр пин ҫын пуҫне вӑрӑм ӗмӗрлӗ 35 ҫын лекет. Ку – тӗнчери чи пысӑк кӑтарту.

Утрав ҫинчи ватӑсем хӑйсен ҫулӗнчен чылай ҫамрӑкрах курӑнаҫҫӗ, сывлӑхӗ те ҫирӗп. Вӗсем рак тата инфаркт чирӗ пирки нимӗн те пӗлмеҫҫӗ. Ҫӗр ҫулти мучи-кинемейсем тивӗҫлӗ канӑва каясси ҫинчен шухӑшламаҫҫӗ. Ҫамрӑксемпе танах мотороллерпа ҫӳреҫҫӗ, каратэпе кӑсӑкланаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ, пахчара ӗҫлеҫҫӗ. Окинавӑра пурӑнакан 96 ҫулти Сайкичи Ухара, тӗслӗхрен, бокс ӑмӑртӑвӗнче Японин 30 ҫулти экс-чемпионне ҫӗнтернӗ.

Ӑсчахсен шухӑшӗпе – ҫынсен ӗмӗрне тӑсаканни кунти кальцирен пуян шыв. Ҫавӑн пекех тӗрӗс апатланни, пурнӑҫа юратни, ӗҫпе канӑва выҫӑнлӑ шайлаштарни те нумай пулӑшать.

Окинава ҫыннисем пӗчӗк калорилӗ ҫимӗҫпе апатланаҫҫӗ, улма-ҫырла, пахча ҫимӗҫ ытларах ҫиеҫҫӗ. Рис тата тинӗс ҫимӗҫӗ – вӗсемшӗн чи юратни. Утрав ҫинче апатлану йӑлийӗркине питӗ вӑйлӑ хисеплеҫҫӗ. Ҫывӑх тӑванӗсемпе пӗрле хитре савӑт-сапаран васкамасӑр ҫиеҫҫӗ. Кашни апатлану вӗсемшӗн уявпа тан. Утрав ҫинчи халӑхӑн пурнӑҫӗ йывӑр ӗҫре иртет. Кашниех ҫапӑҫу искусствисене алла илме тӑрӑшать. Ахальтен мар Окинава – каратэн тӑван ҫӗр-шывӗ. Окинава ҫыннисем Дзен-буддизм вӗрентнӗ пек пурӑнса ирттернӗ кашни куншӑн савӑнаҫҫӗ.

Вӑрӑм ӗмӗрлӗ ҫынсем пурӑнакан яла пырса кӗнӗ ҫӗрте чул юпа ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: "70 ҫулта эсир ача кӑна-ха. 80-ра – яш каччӑ. 90 ҫула ҫитсен мӑн асаттесем хӑйсен патне чӗнсен 100 ҫула ҫитиччен тӑхтама ыйтӑр. Ун чухне, тен, ҫӳл тӳпене каясси пирки шухӑшлама та юрать".

## Юрӑ-кӗвӗ — тӗп вырӑнта

**Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче музыкӑна хисеплени пӗлетӗп-ха. Ҫав ҫулсенче ачасене юрӑ-кӗвӗпе мӗнле меслетсемпе туслаштарнӑ? Ҫак ӗҫ-хӗле камсем туса пынӑ? Ҫав ҫулсенче мӗнле юрӑсене ытларах кӑмӑлланӑ?**

**И.МИХАЙЛОВА.**
Вӑрмар районӗ.



Шкул инспекторӗшӗн И.Я.Яковлевшӑн музыка пулас учительсене кӑмӑл-сипет тата эстетика воспитанийӗ памалли пӗлтерӗшлӗ хатӗр шутланнӑ. Малтанхи вӑхӑтра /1868 ҫултан/ Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче чиркӳ юррисене кӑна юрланӑ. 1870 ҫулта Раштав уявӗ тӗлне вокал ансамблӗ, каярахпа Чӗмпӗр чиркӗвӗсенче юрлакан хор йӗркеленӗ. Юрӑ урокӗсене Хусанти учительсен семинарийӗнче С.Смоленский патӗнче вӗренсе тухнисем ирттернӗ. 1890 ҫулта ҫак ӗҫе Чӗмпӗр чӑваш шкулне пӗтернисене те явӑҫтарнӑ.

Ҫӗнӗ тапхӑр 1898 ҫулта пуҫланнӑ. Шкул канашӗ музыкӑпа литература каҫӗсем иртерме ирӗк панӑ. Унта вырӑс халӑх юррисем, хор валли ҫырнисем, патриот гимнӗсем янӑранӑ. Ҫак вӑхӑтрах чӑваш халӑх юррисене ҫырса илме пӗрремӗш экспедици йӗркеленӗ. Ку ӗҫ-хӗле аталантарма Р.Идобаев вӗрентекен нумай тӑрӑшнӑ. Вӑл уроксем хыҫҫӑн ачасене вырӑс тата чӑваш юррисене вӗрентнӗ. И.Я.Яковлев тата П.В.Пазухин ертсе пынипе вӗренекенсем "Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним" кӗнекере тухнӑ халӑх юррисен нотисене ҫырнӑ.

Питӗрти юрӑҫсен капеллинче вӗреннӗ И.Дмитриев Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче ӗҫленӗ ҫулсенче юрлас ӑсталӑха вӗрентесси вӑйланнӑ. Вӑл репертуара, хора пуянлатнӑ, Ф.Павлова тата С.Максимова пултарулӑха аталантарма нумай пулӑшнӑ. Шкул ачисене пурне те сӗрме купӑс калама вӗрентнӗ, ансамбль те йӗркеленӗ. 1912 ҫулхи ҫуркунне вӗрсе каламалли тата хӗлӗхлӗ инструментсен оркестрӗ ӗҫлеме пуҫланӑ.

Чӗмпӗр музыкҫисем И.Волков, Н.Шувалов, Н.Карташов, О.Крамер, Н.Лыбин, С.Лонгер т.ыт. уйрӑмах пултарулӑ ачасене теори пӗлӗвӗ илме тата инструментсемпе калама вӗренме пулӑшнӑ. Шкулти уявсенче оркестр, хор, уйрӑм юрӑҫсем вырӑс тата Хӗвел анӑҫ Европа композиторӗсен произведенийӗсене янратнӑ.

Шкул пурнӑҫӗнче М.Глинкӑн "Жизнь за царя" оперӑн 1913 ҫулхи нарӑсӑн 22 тата 23-мӗшӗсенче лартнӑ сыпӑкӗ паллӑ вырӑн йышӑнать. Дирижерсем Ф.Павлов тата С.Максимов пулнӑ. Солисчӗсем – Ф.Павлов /Сусанин/, В.Дубровин /Собинин/, К.Эсливанова /Антонида/.

Шкулта вокал ӑсталӑхӗн никӗсӗсене алла илнисенчен чылайӑшӗ каярахпа чӑн-чӑн профессионалсем пулса тӑнӑ. Вӗсен шутӗнче – И.Васильев, А.Токсина, А.Казакова, М.Орлова, М.Измайлов т.ыт.те.

Ҫак тапхӑрта чӑваш халӑх юрӑ-кӗвӗ пултарулӑхне аталантарас пирки те шухӑшлама пуҫланӑ. Шкул тулашӗнче чӑваш юррисене халӑх умӗнче /1909 ҫул, Дворянсен пухӑвӗн залӗ/ юрласа пӑхнӑ. Ку ӗҫе пуҫаракансен шутӗнче И.Дмитриев, П.Миронов палӑрса тӑраҫҫӗ. Каярахпа вӗсен вӗренекенӗсем Т.Парамонов, Г.Лисков, С.Максимов, Ф.Павлов хутшӑннӑ. Совет саманинче Чӗмпӗр чӑваш шкулӗн пирвайхи вӗренекенӗсем пӗрремӗш чӑваш композиторӗсемпе музыка деятелӗсем пулса тӑнӑ.

## Хӑй пысӑк пулин те...

**Тӗнчери чи пысӑк чӗр чун – кӑвак кит – икӗ хутлӑ ҫурта та ҫӑтса яма пултарать ахӑртнех... Е ҫук-и?**

**Е.ИВАНОВ.**
Ҫӗмӗрле хули.

Кӑвак кит халӗччен пирӗн планета ҫинче пурӑннӑ чӗр чунсенчен чи пысӑкки шутлансан та грейпфрутран пысӑкрах япалана ҫӑтса яраймасть. Унӑн пырӗ кӑвапин диаметрӗнчен ытла мар.

Ытти вара пӗтӗмпех пысӑк. Ҫак чӗр чунӑн тӑршшӗ 32 метра яхӑн. 2700 ҫын йывӑрӑшӗ чухлӗ. Ҫапла вара вӑл чи пысӑк динозавртан та виҫӗ хут пысӑкрах. Кӑвак китӑн чӗлхи слонран та ытларах таять. Чӗрин калӑпӑшӗ автомобиль пек. Апат хуранне пӗр тонна ытла тӗрлӗ ҫимӗҫ вырнаҫать.

## Хула илӗртет

**Чӑваш Енре хӑш ҫулсенче халӑх ытларах хулана пурӑнма куҫнӑ?**

**А.АРТЕМЬЕВ.**
Тӑвай районӗ.

Урбанизаци – ҫӗр-шывра, регионта, тӗнчере хуласен шучӗ, общество аталанӑвӗнчи пӗлтерӗшӗ ӳсни. Ҫак юхӑм ӗҫ вӑйӗн куҫӑмне, демографи лару-тӑрӑвне, ҫынсен пурнӑҫне, культурӑна, ытти тытӑма улшӑнусем кӗртет.

Чӑваш Енре урбанизаци вӑрах аталаннӑ. Виҫӗ тапхӑр уйӑрма пулать. Пӗрремӗшӗ – 1930-1940 ҫулсем. Ҫак тапхӑрта ялсенче, хуларипе танлаштарсан, халӑх шучӗ палӑрмаллах ӳснӗ. Иккӗмӗшӗнче /1950-1970 ҫулсем/ ҫынсем хулана, уйрӑмах тӗп хулана, туртӑнма пуҫланӑ. Виҫҫӗмӗш тапхӑрта /1980 ҫултан тытӑнса/ уйрӑмах Шупашкарта пурӑнакансем йышланнӑ, ялсем пушанса юлма пуҫланӑ.

1897 ҫулта хальхи вӑхӑтри республикӑн территорийӗнчи хуласенче Чӑваш Ен халӑхӗн 3,5 проценчӗ пурӑннӑ, 1926 ҫулта – 5,1 процент, 2002 ҫулта – 60,6 процент. 1982 ҫулта хулана куҫакансен йышӗ 50 процентран та иртнӗ.

2014 ҫулхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗ тӗлне Чӑваш Енре 745,8 пин хула ҫыннине шута илнӗ. Ҫакӑ – республика халӑхӗн 60,1 проценчӗ.

## Поэт, куҫаруҫӑ, журналист

**Петӗр Ялкир Вӑрнар районӗнче миҫемӗш ҫулсенче ӗҫленӗ? Унӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ те кӑсӑклантарать.**

**В.КРАСНОВ.**
Вӑрнар районӗ.



Петр Алексеевич Тихонов /Ялкир/ поэт, куҫаруҫӑ, журналист 1922 ҫулта Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Ҫӗн Ирчемес ялӗнче ҫуралнӑ. 1941-1944 ҫулсенче Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пулнӑ. Канашри педагогика училищинчен, М.Горький ячӗллӗ Литература институтӗнчен вӗренсе тухнӑ.

ВЛКСМ Хӗрлӗ Чутай райкомӗн секретарӗнче, Вӑрнар районӗн "Ҫӗнтерӳ ҫулӗ" хаҫат редакторӗнче, КПСС Вӑрнар райкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн пуҫлӑхӗнче, Вӑрнар район ӗҫтӑвкомӗн культура пайӗн ертӳҫинче ӗҫленӗ.

П.Ялкирӑн пӗрремӗш хайлавӗсем 1935 ҫулта кун ҫути курнӑ. 1956 ҫулта "Ҫавал ҫути" сӑвӑсен пуххи пичетленсе тухнӑ. Вун-вун юрӑ авторӗ, ачасем валли те нумай ҫырнӑ. 40 ытла кӗнеке кӑларнӑ. Ҫав шутра – "Капӑр Натали" /1959/, "Тӑван хирте" /1964/, "Ӗмӗтсем пысӑк" /1968/, "Тӗкӗр" /1970/, "Янӑравлӑ шӑнкӑрав" /2002/, "Литературный мир Чувашии" /2005/, "Суйласа илнисем" /2008/ т.ыт.те.

Петӗр Ялкир – ЧАССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. II степень Тӑван ҫӗр-шыв вӑрҫи орденӗпе, медальсемпе наградӑланӑ. Хӗрлӗ Чутай районӗн Хисеплӗ гражданинӗ.

Поэт 2006 ҫулта пурнӑҫран уйрӑлнӑ. Вӑрнар поселокӗнче пытарнӑ.

## Хут пӗлменлӗхе пӗтерер!

**Республикӑра хут пӗлменлӗхе пӗтерессе миҫемӗш ҫулсенче пуҫланнӑ?**

**С.ЕФИМОВ.**
Елчӗк районӗ.

Хут пӗлменлӗхе пӗтерни – 16 ҫултан аслӑрах ҫынсене вулама тата ҫырма вӗрентни. Ку ӗҫ-хӗл РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Канашӗн 1919 ҫулхи раштавӑн 26-мӗшӗнчи "РСФСР халӑхӗсен хушшинче хут пӗлменлӗхе пӗтересси ҫинчен" декретпа килӗшӳллӗн пурнӑҫланнӑ.

1919-1920 ҫулсенче Чӑваш Енре 12 пин ҫын виҫӗ уйӑхлӑх курссенче вӗреннӗ. Чи малтан хӗрлӗ армеецсем, коммунистсем, комсомолецсем, хӗрарӑмсем, активистсем пӗлӳ илнӗ. 1924 ҫулхи пушӑн 3-мӗшӗнче "Хут пӗлменлӗхе пӗтерер!" ирӗклӗ обществӑн чӑваш уйрӑмне йӗркеленӗ. 1920-1928 ҫулсенче ликбез пункчӗсемпе шкулӗсенче 70 пине яхӑн ҫын е республикӑри ҫитӗннӗ кашни саккӑрмӗш ҫын вӗреннӗ. Ҫак йышран 75 проценчӗ ялта пурӑнакан хӗрарӑмсем пулнӑ.

1930 ҫулсенче ку ӗҫ-хӗле тӗрлӗ меслетпе пурнӑҫланӑ. Культпоход, культэстафета, культштурм, "буксир бригадисене" йӗркеленӗ, уйрӑм ҫынсене шефа илнӗ. Тӑкаксен пысӑк пайне общество организацийӗсем саплаштарнӑ. 1928-1940 ҫулсенче 200 пин ҫын ҫырма тата вулама хӑнӑхнӑ.

1917 ҫулчченЧӑваш Енре пурӑнакансен 18 проценчӗ ҫеҫ, ҫак шутран 4 проценчӗ хӗрарӑмсем, хутла пӗлнӗ. 1926 ҫулта 9-49 ҫулсенчи ҫынсен 54,2 проценчӗ вулама, ҫырма пултарнӑ. 1939 ҫулта ҫак кӑтарту – 91 процента, 1959 ҫулта 99,2 процента ҫитнӗ.

1930 ҫулта ачасене обязательнӑй йӗркепе вӗрентессине ҫирӗплетни хутла пӗлменнине тӗпрен пӗтермелли никӗс пулнӑ.

**Кӑларӑма Валентина БАГАДЕРОВА хатӗрленӗ.**

# Чăваш халăхĕн тĕп хаçатĕнче – "Хыпарта" – сире мĕн килĕшмест, мĕн çитмест, мĕн килĕшет?

## Тĕрĕссине çырни тĕрĕс пурăнма хавхалантарать

Эпĕ мĕн шухăшлани пирки пĕр 20 çул манпа никам та калаçман. Ыйтушăн тавтапуç!

"Хыпар", калас тăк, тĕнчери мĕн пур чăвашшăн тĕп хаçат, Аслă Канашăн малти тĕпелĕ пулма тивĕç. Чун-чĕринчи шухăшне унта кашни чăваш ирĕклĕн-уççăн пĕлтерме пултартăр. Совет саманинче пурăннă, çав вăхăт иртнĕ тесе ятлă-сумлă нумай çынна – чаплă наградăсемлĕ производство организаторĕсене, литература, культура, наука деятелĕсене, чылай корреспондента – пичетрен пăрни-пистерни тĕрĕс мар. Тĕп хаçатăмăр тăрăх наци интеллигенцийĕ пурри курăнмасть-ха. Халăх çыравçисен сасси илтĕнмест. Республикăшăн пархатарлă пысăк ĕç пайтах тунисем хальхи ăрăва вĕрентсе мĕн суннине пĕлместпĕр. Хура çăкăрпа чун "çăкăрĕ" пирки, çут çанталăк ырлăх-пурлăхне упрасси пирки халăх поэчĕсем – Яков Ухсай, Стихван Шавлы, халăх писателĕ – Анатолий Емельянов, хăюллă журналистсем – Иван Михайлов, Павел Максимов, Александр Аслут, Вениамин Васильев – çырнисем хăйне евĕр пулăм шутланнă, общество пурнăçне çивĕч шухăшĕсене кĕртнĕ. "Хыпарта" çавнашкал статьясем кирлĕ.

Капитализм моралĕ пуç пулнине кура усал ăншăрт-хаяр ыррине таптаса мала ÿксе пырать. "Вăрă-хурахлă Питĕрпур" йышши сериалсемпе тискерленнĕ çулсенче, "Çеккăс!" та "Çеккăс!" тесе çарапаккаланса Мускаврa кăна мар сикнĕ хушăра çĕр-шывра хăйне майлă урăхла йăх-ăру калăпланчĕ. "Патриот вăл – идиот!" теме тинех-ха пăрахтарасшăн. Чăваша та кăвапаран аяларахра усрама хăтланчĕç. Çÿлелле – чун-чĕре витĕр ăс-тăн тÿпине улăхасчĕ! Пирĕн хамăрла – чăн чăвашла таса-тÿрĕ кăмăл-сипете çирĕплетме тăрăшмалла. Иван Яковлевич халалланă пек. Ку тема культура шайĕнче малта тăмалла.

Информаци хатĕрĕсем /пичет, радио, телекурав/ влаçа ачаш вырăнсенчен кăтăкласа пуç çапни халăха килĕшмест. Пирĕн вăхăтра хаçатра пуçлăхсен сăн ÿкерчĕкĕсене пули-пулми пичетлеме юрамастчĕ. Визит çинчен ялта, районта пĕр-пĕр ыйтăва татса парса усă кÿнĕ чухне кăна хыпарланă.

"Хыпарта", ман шухăшпа, фельетон жанрĕ те, очерк жанрĕ те кирлĕ. Публицист шухăшĕ чăнласах та тишкерÿ шайне хăпартăр. Криминал "аçлăкĕсенче" преступление мĕнле тунине каçăхса çырса кăтартиччен халăха право пĕлĕвĕсемпе тивĕçтересчĕ.

**Михаил ВАСИЛЬЕВ,**
**Ç.Элкер, И.Ивник, А.Емельянов ячĕллĕ премисен лауреачĕ**

## Тĕп хыпарлав чалăшса кайнă пушмакĕ айĕнчен тухасса шанатăп

Чĕрĕк страницăна Сталин портретне лартнă "Чăваш коммунин" 1937 çулхи кăларăмне Англири Оксфорд вулавăшĕнче кăтартса университет профессорĕ аякранах кăшкăрчĕ:

– Хăвăрăн хаçата паллатăн-и, мистер Витали? – тесе хаçат тĕркине саркаласа йăтса пычĕ.

Палламасăр! Пирĕн пÿрт маччинче пурччĕ вĕсем – "Чăваш коммунĕ" /"Чăваш коммуни" тени те/ тата "Капкăнпа" "Сунтал" тĕркисем. Çавсем тăрăх сас паллисемпе пуçласа паллашрăм. Çавăнтанпа вулатăп эпĕ "Хыпара", "Коммунизм ялавĕ" ятлă чухне унта ĕçлесе те куртăм. Çавăнпа чăвашсен тĕп хаçачĕ маншăн килти тăван çын пек хаклă. Эпĕ ăна вуланă чухне çывăх çынсемпе калаçнă пекех пулатăп.

Мĕн килĕшмест хаçатра? Тĕп хаçат шайне тытса пыраймanни, патшалăх ячĕпе йышăнакан документсене тишкерсе хак пама пултарайманни /тĕслĕхрен, бюджет пирки купа-купа хут пичетличчен пĕр-икĕ тĕплĕ тишкерÿ кăларни вулаканшăн усăллăрах та ăнланмаллarах пулĕччĕ/. Республикăри ертÿçĕсен е районти ĕç-пуçшăн яваплă пуçлăхсен, тĕрĕслĕх хуралçисен чапрас куçĕнчен тÿррĕн пăхайманни, публицистла çивĕч калаçайманни, мăшкăл айне лекнĕ пайтаçăсене е тăрăшса ĕçлекенсене хÿтĕлеменни, укçаллă тÿресем хыççăн сĕтĕрĕнмен виртĕс /позици/ çукки... Тен, çавăнпах пулĕ "Хыпара" шкулсемпе аслă шкул вĕрентекенĕсем, сыватмăшсем, вулавăшсем, ял мухтарĕсем, сутуçăсем, фермерсем, директорсем, аякра ĕç шыракан каччăсемпе хĕрсем çырăнса илмеççĕ.

Патшалăх органĕсенче вичкĕн те тĕрĕс сăмах пичетленейменрен "Чăваш тĕпелĕ", "Салам", "Взятка" йышши хаçатсем хытă хĕстернине пăхмасăрах сиксе тухаççĕ.

Пĕр кăларăмрах штатра ĕçлекен авторăн ик-виç шĕвĕ хăтавне лартса яма /"подножнăй кормпа" çырлахма/ тытăнсан, кĕлмĕçленекен калавçă-сăвăçсен вышкал япалисене умлă-хыçлă пичетлесен, çав вăхăтрах классиксене пачах асăнманнине, ĕç ăстисен /специалистсен/ проблемăллă статйисене сирсе хунине пĕлсен хаçата пăхас килми пулнăччĕ. Вара "Хыпартан" туллирех тухакан "Çамрăксен хаçатне", "Тантăша" тата "Чăваш хĕрарăмне" вулама пуçларăм.

Тĕп хаçат малашне те хупăнчăк юлсан, "Урал сасси" /Пелепей/, "Сувар" /Хусан/, тата та ытларах "Салам" /Шупашкар/ хаçатсем унран чылай иртсе каяççĕ. Вĕсен тиражĕ халĕ те "Хыпар" хаçат патнех капашать.

Чăваш журналистикинче тĕнче шайĕпе шухăшлакан ăстасем пур. Вĕсем Тăван çĕр-шывпа тăван халăха Интернет саманинче мĕнле хаçат кирлине хĕсĕк хĕсметçĕ министрсемпе чылай депутатран лайăхрах пĕлеççĕ, çавăнпа хальхи чăваш хыпарлавĕ чалăшса кайнă пушмакĕ айĕнчен тухасса шанатăп.

Апла-и, капла-и, республикăри влаç аллинчи хаçатпа юнашар пĕтĕм тĕнчери чăваш хушшине сарăлакан "халăх хаçачĕ" пулатех. Наци конгресĕн "Чăваш тĕнчи" кăларăмĕ халĕчченех "Хыпарăн" çум çакки евĕр çеç пичетленчĕ. Унăн прессăри витĕмĕпе вырăнĕ тупăнмарĕ. Эппин, "Хыпар" хаçатăн тĕп тĕременне суйланă чухне ним шикленмесĕрех пĕтĕм наци валли "Чăваш тĕнчи, Салам" хаçат тăвас ыйтăва татса пама тивет.

**Виталий СТАНЬЯЛ,**
**ăсчах**

### Сире пĕлме: «Хыпарти» ятарлă кăларăмсем

**Редакцирен:**

**Эпир, журналистсем, "Хыпар" хаçата вулакансем валли кăларатпăр. Вăл мĕнле пахалăхлă пуласси вара, тăванăмăрсем, сирĕнтен те нумай килет. Çакна тĕпе хурса ĕнтĕ паян çĕнĕ ярăм уçрăмăр.**

**Вăл ирĕклĕ трибуна евĕрех пулĕ. Хăвăрăн шухăшăрсене – çĕнĕ технологисен ĕмĕрĕнче хаçат еплерех пулмалла, мĕнле темăна ытларах çутатмалла, кăларăмри ятарлă страницăсем тивĕçтереççĕ-и тата ытти те, тата ытти те – çырупа е электрон почтăпа ярса пама ыйтатпăр.**

**Критиклĕр, асăрхаттарăр, сĕнĕр!**

## Шанăç çĕнĕрен çуралчĕ

Мана халĕччен «Хыпарта» /пĕр вунă çул пулĕ/ нимĕн те килĕшмен. Тĕп редакторăн политики улшăнмасăр хаçата çырăнса илместĕп тенĕ эпĕ. Кун пирки сирĕн малтанхи ертÿçĕне уççăнах каланăччĕ. Чăваш политики пулманни, Чăваш наци конгресне çÿллĕ шая çĕклесси пирки уççăн çыртарас килетчĕ манăн. «Хыпарăн» тĕп редакторĕ пире: «Çырăр, пире критика статйисем кирлĕ»,– тетчĕ. Çивĕч материалсем параттăмăр та – пичетлеместчĕ. Тĕрĕссипе, эпир ЧНК ĕçне тиркенĕ кăна мар, хамăр енчен сĕнÿ-канаш та панă. Юлташсем суйма памаççĕ, эпир чăвашлăхшăн ĕçлетпĕр, ытти регионта пурăнакан чăвашсем патне çитетпĕр. Ĕç-хĕлĕмĕр пирки чăвашсен тĕп хаçатне статья парсан та малтанхи ертÿçĕ манăн хушамата туртса хуратчĕ. Манăн чăннипех «Хыпара» чăваш халăх хаçачĕ пек курас килетчĕ. Эпĕ «Сувар» хаçата аталантарассишĕн нумай ĕçлерĕм. Унăн редакторĕ Константин Малышев çивĕч статьясене хăрамасăрах пичетлет. Эпĕ хаçат-журналпа питĕ интереслenетĕп. Ирçесен хаçатне те çырăнса илетĕп. Вĕсемпе Интернетра паллашни тивĕçтермест, алла илсе, уçкаласа, киленсе вулас килет.

«Хыпар» иртнĕ вунă çуллăхра ЧНК ĕçне куç кĕрет хирĕçле утăм туса пычĕ. Чăвашлăхшăн чунне ыраттарса çырнă материалсене пичетлемерĕ. Уйрăм çыннăн хаçачĕ пекех пулса кайнăччĕ вăл. Манăн вара ăна çĕр чăмăрĕ çинчи мĕн пур чăвашăн юратнă, кĕтнĕ хаçачĕ тăвас килетчĕ. Халĕ акă шанăç çĕнĕрен çуралчĕ. Ăна, çĕнелнĕскере, çĕнĕ варкăш кĕртнĕскере, çырăнса илĕп. Хам вуланипе кăна çырлахмăп, тăвансене, шкулсене 10 «Хыпар» çырăнса парăп.

**Тимĕр ТЯПКИН,**
**«Сувар» фонд вице-президенчĕ, предприниматель**

## Çивĕчрех, шăллăрах пулмалла

«Хыпар» çивĕч ыйтусене хускатмасть теме çук, анчах статьясенче аналитика çитмест. Калăпăр, чăваш наци лицейĕ хупăнни çинчен Геронтий Никифоров вĕрентекен темиçе хут та çырчĕ. Ку лайăх. Анчах ăçта журналист тĕпчевĕ? Пултаруллă ачасене пулăшасси пирки калаçнă вăхăтра чи пĕлтерĕшлĕ лицейăн ĕçне кĕтмен-çĕртен чарса лартаççĕ. Камсем тата мĕншĕн çапла хăтланнă? Лицей çĕрĕшĕн пуçланнă пăтăрмах кăна тени тĕрĕсех-и? Çакнашкал ыйтусен уççи-хуппине шырамалла.

«Хыпар» услам саманинче те ÿнерпе сăмахлăх, вĕренÿпе ăслăлăх ĕçченĕсене халалланă статьясем пичетлеме май тупать. Унта ĕлĕкхи пек юбилярăн биографийĕ пулмалла мар, пултаруллă çыннăн хăйне евĕрлĕхне тата вăл пирĕн культурăна мĕнпе пуянлатнине уçса памалла.

Хаçат ĕçченĕсем хатĕрлекен тематика страницисенчен чылайăшĕ искусствăллăрах тата пушăрах япаласем. Вĕсене хăварас тесен проблемăллă материалсемпе пуянлатмалла. Хаçат чĕлхи уйрăм çын кăмăлне йăпатмалла мар, халăха килĕшÿллĕ пулмалла. Чĕлхене юриех пăсса çырни – тĕслĕхрен, кăтарту ылмашне /местоимение/ паллă ячĕ хыççăн лартни – мĕн тума кирлĕ! Эпĕ ăнланмастăп.

Шкулта вĕрентекенсем вăхăтран вăхăт Шупашкара Вĕренÿ институтне курссене килеççĕ, вĕсене унта ачасене пĕлÿ парас ĕçри çĕнĕлĕхсемпе паллаштараççĕ. Чăваш хаçат-журналĕнче ĕçлекенсем тата чăвашла кăларăмсем хатĕрлекенсем валли 3-4 çулта пĕрре çакăн пек курссем йĕркелемелле. Унта журналистикăри тата чĕлхе аталанăвĕнчи çĕнĕлĕхсемпе, тăван культурăри çивĕч ыйтусемпе паллаштармалла. Кунашкал курссене, министерство кăмăлĕ пулсан, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ çумĕнче йĕркелеме пулать-тĕр.

**Геннадий ДЕГТЯРЕВ,**
**Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн пай пуçлăхĕ**

# «Канаш» 80 çул каялла мĕн çырнӑ?

*Алӑра – "ЧАСС Республикӗнчи ПСК/б/П Обкомӗн, Тӗпӗçтӑвкомӗн тата Совпрофӑн кашни кун тухакан хаçачӗн" – "Канашӑн" /халӗ "Хыпар"/ – 1934 çулхи кӑларӑмӗсен тӗрки. Ӑна 80 çул каялла ӗçтешсем мӗн çинчен çырнине, çав вӑхӑтра халӑха мӗн кӑсӑклантарнине пӗлес килни уçса пӑхма хистерӗ. Авӑн уйӑхӗн 2-мӗшӗнче вырсарни кун тухнӑ 202 /3814/-мӗш номерпе паллашар-ха. Çав вӑхӑтри орфографипе пунктуацие сыхласа хӑварма тӑрӑшнӑ.*

## Радиограммӑ

### Райӗçтӑвком председателӗсене, парти райком секретарӗсене

Çентаберӗн 4-мӗшӗнче, вырӑнти вӑхӑтпа каçхине 10-сехетре вӗренӳ çулӗ пуçлани çинчен радиоперекличка пулат. Вӗренӳ çулне мӗнле хатӗрленсе çитни çинчен, строительствӑ, вут-шанкӑ турттарса кӑларас, кӗнекесем, ытти вӗренӳ хатӗрӗсем хатӗрлес, учитлӗсене хатӗрлесе вырӑнсене вырнаçтарса пӗтерес, пӗрремӗшпе пиллӗкмӗш классене ачасем илсе тултарас, вӗри апатсем организацилес, шкул учаскисенчен тырпулсене, пахча-çимӗçсене пуçтарса кӗрес ӗçсем мӗнле пыни çинчен докладсем хатӗрлӗр.

**Халӑх комиссарӗсен канашӗ – А.Йакӑвлӗв.**
**Парти обкомӗ – И.Кузнецов.**

### Малтисен йулса пыракансене пулӑшса, пӗтӗмӗшпе ӳсӗм тумала

Канаш, августӑн 31-мӗшӗ. Августӑн 31-мӗшӗнче ПЕТРОВ йул. Канаш районӗнчи колхозсенче тата ялсенче пулчӗ.

Ухман йалсоветӗнче йединоличниксем патшалӑха тырӑ мӗнле панипе паллашрӗ. ПЕТРОВ йул. пынӑ кун йалсовет патшалӑха тырӑ парас плана 78 процент кӑна тултарнӑ. Вӑтам пурӑнакан **Иванова тырӑ çапнӑ та кӳрше йалӗнче пытарса усрат,** патшалӑха тырӑ памаст. Петров йул. йалсовета саботажниксем пирки питӗ çирӗп мерӑсем: – сута парасси патне çитичченех çирӗп мерӑсем, – йышӑнма кирли çинчен кӑтартса пачӗ.

"ХУЧЕЛ" колхозра Петров йул. пахчари ӗçсемпе паллашрӗ. Кунта çырма-çатраллӑ çӗрсем çинче кӑнтӑр йенчи çимӗçсем: арпус, дынӑ, баклажан, мексика помидорӗ лайӑх пулса çитнӗ. Çак çимӗçсенчен колхоз 16 пин тенкӗ тупӑш илет. Кунта колхозниксемпе калаçнӑ чух, Петров йул. йалхуçалӑхне ӑнӑçлӑн вӗçлеме кирли çине, 1935 çулхи вӑйлӑ тырпулшӑн мӗнле кӗрешмелине кӑтартса пачӗ. Кунпала пӗрлех колхозниксене ертеллӗ мунча тума сӗнӳ пачӗ.

### Лашасен чӗрнисене тасатмаççӗ

Пырçырланти "Хресчен" колхозӑн /Йетӗрне р./ лашисем калама çук начарланса кайнӑ. Ку пӗтӗмӗшпех конюхсем лашасене тӗрӗс, йӗркелӗ пӑхманнинчен килет. Нормӑпа типтерлӗ çитересси кунта пачах çук. Вӑйсӑр лашасене уйрӑм пӑхмаççӗ.

Колхозӑн вите çумӗнче аптечкӑ пур, унпала чирлӗ лашасем пур пулсан та усӑ курмаççӗ. Лашасен чӗрнисем çитӗнсе кайнӑ, вӗсене касса тасатма пӗр хатӗр те çук, нихӑçан та тасатман.

Кашни кун хӑш лашасене ӗçе йанине шута илсе пымаççӗ. Çавӑнпа та хӑшпӗр лашасем пӗр канмасӑр та ӗçлеççӗ.

Колхоз правлени ку çитменлӗхсене пӗтерес пирки нимӗн те тумаст.

**Н.Урмай.**

### Çилос хурасси йапӑх пырат

Мӑн Сӗнтӗр. Тутаркасси районӗнче çилос хывас ӗç калама çук йапӑх. Анчар, Мӑн Хураçка, Карайкасси, Пушкӑрт, Мӑн Сӗнтӗр, Хачӑк, Тептей, Шашкар, Шатракасси, Шупуç, Йуванӑвӑ йалсоветсенчи колхозсем пайан куна çитсе те пӗр тонна çилос хывман. Йалсоветсем ӗç хӑйех пулса пырасса шанса колхозсене нимӗнле те кӑтартусем те парса пулӑшман.

Райçӗрӗç тытӑмӗ те çилос хатӗрлес ӗçре тӗплӗн йертсе пымаст.


КАНАШ
ЧАСС Республикӗнчи ПСК(б)П Обкомӗн, Тӗпӗçтӑвкомӗн тата Совпрофӑн кашни кун тухакан хаçачӗ
Малтисен йулса пыра-
Культмассӑлӑ ӗç çук
Республикӑ районӗсем, колхозсем, йалсем тӑрӑх
С. П. Петров йултӑш районсенче

### Пуйан пурнӑç килчӗ

Кушкӑри "Сухаçӑ" колхоз /Елчӗк р./ кӑçал тырпулсене пӗр тӑкаксӑр пуçтарса кӗрсе авӑна кӗске вӑхӑтрах çапса пӗтерчӗ. Çӑмӑрсем ӗçе чӑрмантармарӗç. Икçӗр метр тӑрӗш лупас айӗнче нимӗнле çумӑр та çук. Молотилкӑсем хӗрсех ӗçлеççӗ. Тырӑ та типӗ.

– Тавтапуç большевиксене ку лупаса шухӑшласа кӑларнӑшӑн, – терӗç колхозниксем авӑн пӗтернӗ кун. /…/

– Пуйан пурнӑç килчӗ, çак аслӑ урама клуб туса лартма та вӑй çитет ӗнтӗ, – терӗ колхоз председателӗ пухура, кӑçалхи кӑтартуллӑ ӗçсем çинчен каласа пӗтерсен. /…/

Вылӑхсӑр колхозник "Сухаçӑра" текех çук. Колхоз пулӑшнипе 5 ӗнесӗр колхозник ӗнесем туянчӗç. Кашни пекех ӑратлӑ сурӑх, ӑратлӑ сысна туйанат. Вылӑх апат-çимӗçӗ хӗллене çителӗклех пулат. Колхозниксем симӗс çулçӑ, йӑран, вӑрман ути нумай хатӗрлерӗç. 25 тоннӑ çилос хывса хӑварчӗç.

**Т.Миронӑв.**

### Саккуна пӑсакана хирӗç хайарӑн кӗрешер

Канаш районӗ – финанс плане тултарас тӗлӗшпе кайа йулса пыракан районсенчен пӗри. Августӑн 20-мӗшне 3-ш кварталӑ плане вӑл 32,5 проц. çеç тултарнӑ. Анчах укçа-тенкӗ пухас ӗç çав тери кайа йулни райфинпайне те, унӑн пуçлӑхӗ пулса ӗçлекен Иванова та, пӗрте кулантармаст. /…/

Сӑмахран, Йамаш йалсоветне пынӑ райӗçтӑвком бригади пӗр, 1934 çулхи августӑн 7-мӗшӗнче пулса иртнӗ ларура 119 хуçалӑха икӗ хут пысӑкрах налог тӳлеттермеле тунӑ. Çак хуçалӑхсенчен чылайӑшне налог укçине икӗ хут нумайрах тӳлеттермеле тума бригадӑн пӗр сӑлтав та пулман.

Час-часах, обчалӑх хушшинче активлӑ ӗçлекен çынсенех икӗ хут нумайрах налог тӳлемеле тунӑ. Сӑмахран, Именево йалӗ тӑрӑх уполномоченнӑй пулса ӗçлекен Федотов Владимира 3-ш квартӑлшӑн патшалӑха 1 килограм пама ӗлкӗрейменшӗнех ытлашши налог тӳлеттерме йышӑннӑ. Августӑн 20-мӗшне унӑн çу парӑмӗ 200 грам кӑна йулнӑ. Çакӑн пек сӑлтавсӑр айӑплӑ тунӑ çынсем унта питӗ нумай пулнӑ. Çавӑнпа та, лайӑх тӗрӗсленӗ хыççӑн, 150 хуçалӑхран 100 хуçалӑхне налог укçине икӗ хут нумайрах тӳлесрен хӑтармала пулчӗ. /…/

**В.Таврин.**

**…Вуланӑ майӑн вун-вун çул каялла кун çути курнӑ статьясен авӑрнех путрӑм. Кӑсӑклӑ, уççӑн тата хӑрамасӑр çырнӑ. Кашни материал вӑл е ку çитменлӗхе тӑрӑ шыв çине кӑларать. Хаçатра критикленин витӗмӗ пулнах пуль çав. Колхоз, "йалсовет", ытти тытӑм ертӳçисене "пӗçертсе" илни пуш сӑмах шайӗнче çеç юлнӑ пек туйӑнмасть. Унсӑрӑн çапла çырман /е çырма ирӗк паман/ пулӗччӗç.**

**Тӗп тема, паллах, республикӑри колхозсенчи ӗç-хӗл. Çав çулсенче ӗç çынни, çӗр çинче тӑрӑшакан хресчен чаннипех те хисепре пулнӑ. Унӑн ӗçне хаçатра ытларах çутатма тӑрӑшнӑ. "Республикӑри Хӗрлӗ Хӑма" рубрикӑна тытса пыни уйрӑмах килӗшрӗ. Унта лекесси пысӑк чыс шутланнӑ ӗнтӗ. Хресчене тата та ытларах ӗçлеме хавхалантарнӑ.**

**Çак номертех вӗрентӳри çитменлӗхсем пирки çырнӑ статья та кун çути курнӑ. Унта шкулсенче географие начар вӗрентни çинчен сӑмах пырать. Çӗр-шыв хыпарӗсемпе те паллаштарнӑ. "Петров йул." сӗннине шута илсе-ши "ертеллӗ мунча" тума та вӗрентнӗ.**

**"Канаш" ун чухне 7000 экземплярпа тухнӑ. П.И.Иванов "ответлӑ редактор" пулнӑ.**

**Хаçата В.БАГАДЕРОВА вуланӑ.**

# Кӗнеке – тӑнӑçлӑх тата аталану хуралӗнче

*Мускавра авӑн уйӑхӗн 3-7-мӗшӗсенче çакӑн пек чӗнӳпе Пӗтӗм тӗнчери XXVII кӗнеке куравӗ-ярмӑркки иртрӗ. Унта Чӑваш кӗнеке издательстви те хӑйӗн "çимӗçӗсене" кӑтартрӗ: 130 тӗрлӗ кӑларӑм.*

Кӗнеке тусӗсем Геннадий Айхин "Собрания сочинений" кӗнекен виççӗмӗш томӗпе, К.В.Ивановӑн вырӑсла тата чӑвашла тухнӑ "Нарспи" поэмипе, "Чебоксары: исторический очерк" монографипе, С.В.Щербаковӑн "Государственные символы Чувашской Республики: история создания, проекты, документы и материалы", В.Д.Димитриевӑн "Чувашский народ в составе Казанского ханства. Предыстория и история", В.Н.Иванскин "Мы с памятью слиты. Дети блокады в Чувашии", Е.Ф.Васильевӑн "Словарь синонимов чувашского языка", Л.П.Сергеевӑн "Словарь синонимов и антонимов" кӗнекисемпе, "Чӑваш халӑх пултарулӑхӗ" ярӑмри вун иккӗмӗш томӑн пӗрремӗш "Чӗлхе сӑмахӗсем. Вӗрӳ-суру чӗлхи" кӑларӑмпа паллашрӗç. Курава пынӑ çынсем тавра пӗлӳ тата ӑслӑлӑх литературипе те кӑсӑкланчӗç. Выставкӑна çавӑн пекех пӗчӗккисемпе шкул ӳсӗмӗнчи ачасем валли кӑларнӑ кӗнекесене йышлӑ тӑратнӑ.

Кӑçал кӗнеке форумне 63 çӗршывран 500 ытла издательство хутшӑнчӗ. Куравра тӗнчери вун-вун чӗлхепе кун çути курнӑ 200 пин ытла кӑларӑмпа паллашма май килчӗ. Курав-ярмӑркҫан кашни кунӗ кӗнеке кӑларассипе çыхӑннӑ çивӗч ыйтусемпе йӗркеленӗ тӗрлӗ мероприятирен пуян пулчӗ. Уйрӑмах курӑмлисем – Славян культурин форумӗ, "Раççейри кӗнеке рынокӗ – 2014" конференци, Н.Михалковӑн тата В.Мединскин кӗнекисен презентацийӗ. Б.Акунин, Т.Толстая, Ю.Мориц, Л.Аннинский, Э.Радзинский, З.Прилепин, Д.Донцова, Л.Улицкая, Е.Водолазкин, Д.Глуховский, В.Войнович писательсем вулакансемпе тӗл пулчӗç. Кӗнеке куравне çавӑн пекех Франци драматургӗ Эрик-Эммануэль Шмитт, Польша авторӗ Януш Вишневский, Би-Би-Си документалисчӗ Бен Макинтайер хутшӑнчӗç.

Çавӑн пекех "Çулталӑк кӗнеки", ача-пӑча кӗнекисене илемлетекенсен, вырӑсларан ют чӗлхесене куçаракансен конкурсӗсен çӗнтерӳçисене чысларӗç.

■ **Надежда ОСИПОВА**



РЕКЛАМА ПӖЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ, 13-мӗш ҫурт, 316-мӗш пӳлӗм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

БЕТОН
РАСТВОР
КОЛЬЦА
блоки ФБС
ДОСТАВКА
Тел.: 49-00-22
8-966-249-00-22
8-909-301-31-90

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2800 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88


СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ
ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 8-903-379-09-01.

**416. Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**456.Услуги КамАЗа-**55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

**459.Установка** заборов, ворот, винтовых свай. Т. 8-917-650-06-40.

**460.Обшивка** домов сайдингом, **утепление.** Т. 8-902-287-27-77.

**590.Удаление вмятин, полировка, химчистка,** шумоизоляция, карбон. Т. 36-22-88.

**621.Обшивка домов** сайдингом, вагонкой. **Кровельные работы.** Т. 8-919-672-47-48.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.89603109878.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**Мини-тракторы, мотобуксировщики, МОТОБЛОКИ, косилки роторные, двигатель дизельный 18 л. с., доильные аппараты.**
**Ремонт. Гарантия.**
Маг. «Каскад», г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. «ул. Ахазова». **Тел. 41-59-83.**

**МОТОБЛОКИ.**
**Ставлю двигатели "Subaru" /пр-во Япония/ на отечественные мотоблоки.**
Маг. "Каскад", г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. "ул. Ахазова". **Тел. 41-59-83.**

## Ӗҫе илетпӗр

**«Хыпар» Издательство ҫурчӗ ЭВМ калӑплав операторне ӗҫе илмешкӗн конкурс ирттерет. Унта Adobe InDesign, Page Maker, Photoshop, Corel Draw программӑсемпе ӗҫлеме ӑста, чӑвашла лайӑх пӗлекен ҫынсем хутшӑнма пултараҫҫӗ.**

**Документсене ҫак адреспа йышӑнаҫҫӗ: Шупашкар, И.Яковлев проспекчӗ, 13, 3-мӗш хут, 312-мӗш пӳлӗм.**

**Ыйтса пӗлмелли телефонсем: 56-00-67, 62-08-62.**

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича.** Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 4200 р.; **ДВЕРИ стальные** от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. **8-937-954-92-45.**

**33.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-905-346-56-71.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**46.ПЛИТЫ** тротуарные, **БРУСЧАТКУ.** Дёшево. Т. 8-967-470-68-19.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**ОБЪЯВЛЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТЫХ КОНКУРЕНТНЫХ ПРОЦЕДУР ЗАКУПОК В 2014 ГОДУ**

Заказчик - ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (428020, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 13А), являющийся организатором конкурентных процедур, настоящим объявляет о начале открытых закупочных процедур и приглашает юридических лиц к участию в открытом запросе предложений ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (лот №14/1-ТПиР-2014-ЧЭСК), способных на законных основаниях выполнить объявленный объем работ и представить свои предложения для заключения Договора подряда на выполнение работ по реконструкции помещения первого этажа Центра энергоэффективности для размещения Центра печати для нужд ОАО "Чувашская энергосбытовая компания".

Официальные публикации документов, объявляющих о начале открытых закупочных процедур, осуществляются на официальном сайте http://www.zakupki.gov.ru, закупка проводится на электронной торговой площадке B2B-Energo.ru. Подробное описание поставляемой продукции и выполнения работ, условия Договора содержатся в Документации по открытому запросу предложений. Документация бесплатно предоставляется в электронном виде всем заинтересованным Участникам, зарегистрированным в системе B2B-Energo, через электронную торговую площадку B2B-Energo.ru по запросу (копия извещения с документацией дополнительно на сайте ОАО "Чувашская энергосбытовая компания").

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:130201:1 площадью 738800 кв.м., местоположение: Местоположение установлено относительно ориентира, расположенного в границах участка. Ориентир в центральной части кадастрового квартала 21:08:130201. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Батыревский район, Новоахпердинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5, каб.№7. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:160101:31 площадью 250427 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:340103:63 площадью 41830 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. (83532)6-14-26.

## П Р О Д А Ю

**55.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**172.ГРАВМАССУ, КЕРАМБЛОК, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**317.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит,** кольца. Т. 89278629166.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. **Т. 8-917-677-68-46.**

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**570.Щебень, песок,** гравмассу, навоз, торф, чернозём. Доставка. **Услуги самосвала** – 15 тн. Т. 89876692941.

**618.Копалки,** сортировки, **плуги,** дискаторы, **разбрасыватели.** Дёшево. Доставка. Т. 8-937-955-98-02.

**619.ПИЛОМАТЕРИАЛ** от производителя – любой, **утеплители,** крепежные изделия, **гидропароизоляция.** НДС. Т.: 37-69-01, 440-447.

**620.КОМНАТУ** 15 кв.м. **в с. Шемурша,** ул. Космовского, д. 28. Цена договорная. Т. 8-927-841-26-96.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.

**604.МОНОЛИТЧИКИ в Москву.** Т.: 8-966-108-22-36, 8-926-686-73-21.

# Паллă ентешсен сăнĕсем Шупашкара илемлетĕç

Шупашкар 2014



*Чăваш Ен Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума хатĕрленет. Пирĕн мухтавлă спортсменăмăрсем те пĕлтерĕшлĕ пулăмран юласшăн мар. Çак кунсенче ЧР Суту-илӳпе промышленноç палатинче иртнĕ фотосессие хутшăнчĕç.*

Палăртмалла: форум вăхăтĕнче паллă ентешсен сăнĕсене Шупашкар урамĕсенче курăпăр. Çакăн пирки палата ертӳçи Игорь Кустарин та пĕлтерчĕ. Организацие юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче çак пулăмпа çыхăннă тĕрлĕ мероприятие йĕркелеме хушнă. Çав шутрах – баннерсемшĕн вĕсем яваплă. Игорь Владимирович каланă тăрăх – Республика тӳремĕнчи 2-мĕш павильонра «Хальхи спорт: çĕнĕлĕхсемпе малашлăх» спорт индустрийĕнчи çитĕнӳсен куравĕ уçăлĕ. Унта экспонатсемпе паллашнисĕр пуçне тĕрлĕ мероприяти, çав шутра ачасем валли вăйăсемпе викторинăсем, йĕркелеме палăртнă. Фотосессие пухăннисен йышĕнче – сумлисем, пирĕн республикăмăра чапа кăларнисем, тĕрлĕ ăмăртупа чемпионатсенче палăрса Чăваш Ен ят-сумне çӳле çĕкленисем. Олимп тӳпине çĕкленнĕ Елена Николаева, Алина Иванова, Олимпиада Иванова, Владимир Андреев, Светлана Захарова – пĕр спорт мероприятийĕнчен те юлмаççĕ. «Çăлтăрсен» хушшинче 2000 тата 2004 çулсенче Олимп вăййисенче ăмăртнă Лидия Григорьева марафонçăна та палласа илтĕмĕр. Çулталăк каялла тренер ĕçне пуçăннăскер хăйне питĕ сăпайлă тытрĕ. «Чăваш Ен вун-вун паллă спортсмена çитĕнтернĕ, çавăнпа форума пирĕн республикăра ирттерме йышăнни питĕ тĕрĕс шухăш», – пĕлтерчĕ вăл. Раççей кубокĕн тата чемпионачĕн паттăрĕсем, икĕ юлташ Петр Трофимовпа Александр Яргунькин тахçантанпах курман пулĕ – пĕр-пĕринчен уйрăлма пĕлмеççĕ. Вĕсен ентешне /виççĕшĕ те Муркаш тăрăхĕнчен/, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Вера Соколовăна та журналистсем сырса илнĕ. Олимп вăййисен бронза призерне, нумаях пулмасть çĕр-шыв чемпионатĕнчен çĕнтерӳпе таврăннă Татьяна Архиповăна алă çупса кĕтсе илчĕç, çулталăкри ывăлне хăварсах çитнĕ вăл. Акă пултаруллă марафонçă Альбина Майорова мероприятие пĕччен килмен – 1-мĕш класра вĕренекен пĕчĕк хĕрĕпе. Ольга ӳссен амăшĕ пекех спортсмен пуласшăн иккен. «Спортпа туслă, вăйлă чупать. Хампа пĕрле сборсене илсе çӳретĕп, тренировкăна та тухать, унта килĕшет ăна. Спортсменăн çăмăл мар пурнăçĕн çулĕ çине тăрĕ-и – каярах куç курĕ», – терĕ Европа чемпионачĕн призерĕ. Спортсменсен йышĕнче Сурдлимп вăййисен маттурĕсене Иван Пакинпа Анастасия Мамлинăна та сăнарăмăр. Кăçал Челябинскра иртнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнче маттур хĕрпе качча пурĕ 6 медаль çĕнсе илнĕ. Аэробика хастарĕ Алексей Германов, республикăри пĕртен пĕр сумоистка, ку енĕпе тĕнче чемпионатĕнче çĕнтернĕ Анастасия Тарасова, Олимп вăййисен призерĕ Ольга Смирнова тата ыттисем хутшăнчĕç фотосессие.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

# Гороскоп

**Авăн, 15-21**

**Сурăх.** Ку тапхăрта хирĕçес кăмăл çуралĕ, анчах çăлтăрсем эрнене харкашуран пуçлама сĕнмеççĕ. Кĕçнерни кун вăй-хал пухăннине туятăр, çавăнпа чылай ĕçе пурнăçлатăр. Кун хыççăн эрне вĕçĕнче лăпкăн канма пултаратăр. Çăлтăрсем тĕллевĕрсем пирки никама та систерме хушмаççĕ, унсăрăн ăмсанакан тупăнатех. Вырсарни кун тăвансене хăнана чĕнĕр.

**Вăкăр.** Ку эрнере темĕн тума та ĕлкермелле. Йывăр пулĕ, паллах, анчах интереслĕ çынсемпе паллашни, тавра курăма анлăлатни кăмăлăра кайĕ. Вăй-хал тапса тăрĕ, çавăнпа сирĕн пата юлташсем те туртăнĕç. Эрне кун юратнă кĕвве итлесе чунпа канăр. Эрне вĕçĕнче концерта çитсе килни те пăсмĕ.

**Йĕкĕреш.** Çак тапхăрта хăвăра алăра тытма йывăр пулĕ, мĕншĕн тесен туйăмсем тапса тăрĕç. Ку юратăва çеç пырса тивмест. Юн кун вĕчĕрхенмелли тупăнĕ. Палăртнă тĕллевсем пурнăçланманни, вăхăта сая яни кăмăла хуçĕ. Шăмат кун çывăх çынпа чуна уçса калаçни канăçсăрлантаракан ыйтăва уçăмлатма май парĕ.

**Рак.** Çӳл тӳперен çĕр çине анма тивĕ. Мĕн чухлĕ нумайрах ĕçлетĕр – çавăн чухлĕ лайăхрах. Ку çитĕнӳ тума пулăшĕ. Тунти кун тавлашура хăвăр тĕрĕс пулнине çине тăрса ан ĕнентерĕр. Унран пăрăнсан лайăхрах. Эрне кун тахçанхи ĕмĕт пурнăçа кĕрĕ, çавăнпа канмалли кунсене тулли кăмăлпа ирттеретĕр.

**Арăслан.** Ку эрнере чылай ыйтăва уçăмлатма тивĕ. Йăлтах ĕлкĕрес тесен плана палăртмалла та ăна пăхăнмалла. Ăнăçу тăрук килессе кĕтсе ан ларăр. Вăл сирĕн енне майĕпен куçĕ. Юлташăрсемпе пĕлĕшĕрсем сире темĕн те каласа кăтартĕç, анчах суя сăмаха ĕненмеллех-ши? Канмалли кунсенче хăвăра мĕнпе те пулин савăнтарăр. Тĕслĕхрен, тутлă апатпа сăйланăр.

**Хĕр.** Ку эрнере лăпкăн ĕçлетĕр. Суйланă ĕç кăмăла тивĕçтерет тĕк урăххи çинчен ан шухăшлăр. Эсир тăрăшса вăй хунине пуçлăх та хак парĕ. Тĕллев патне талпăнни тунти кунпа юн кун сиксе тухнă йывăрлăхсене парăнтарма май парĕ. Анчах вăя перекетлĕр, унсăрăн эрне вĕçнелле ывăннине туятăр. Пĕр-пĕр ĕçре йăнăш тунине асăрхарăр тăк хăвăра улталама тăрăшса ăна малалла ан тăсăр – çĕнĕрен пуçлăр.

**Тараса.** Ку эрнере сирĕншĕн юлташсемпе, тăвансемпе хутшăнни пĕлтерĕшлĕ. Çăлтăрсем малтанхи шухăшсене пурнăçа кĕртме май пуласса систереççĕ. Пуçлăх унччен-хи çитĕнӳсене хакламарĕ-и? Вĕсене вăл çак тапхăрта асăрхĕ, хавхалантарĕ. Вырсарни кун вăхăта пĕччен е чи çывăх çынсемпе ирттерме тăрăшăр.

**Скорпион.** Пуçарулăха кăтартмашкăн меллĕ тапхăр пулĕ. Пуçлăха тĕллевĕрсемпе, шухăшăрсемпе паллаштарăр. Вĕсене пурнăça кĕртме пулăшакан тупăнатех. Анчах ăнăçу сирĕн енче пулнине кура пуçа ан çухатăр. Юн кун çут çанталăк лапамĕнче канма май тупăр. Çăлтăрсем канмалли кунсенче юсав ĕçĕ ирттерме, кил-çуртра тирпейлеме сĕнеççĕ.

**Ухăçă.** Кахал пусса илĕ. Эппин, вĕçне çитерейменĕçсемшĕн, палăртнă тĕл пулăва кайманшăн тӳрре тухма тивĕ. Ĕç хушăнсах пырĕ, çавăнпа хăвăра алла илсе малалла талпăнăр. Сывлама та вăхăт çук пулсан та канма май тупăр.

**Ту качаки.** Плансемпе шухăшсене вăрттăнлăхра тытăр. Вĕсене эсир никам пулăшмасăрах пурнăçа кĕртме пултаратăр. Кулленхи ĕç, ыйтусем çинче çеç чарăнса ан тăрăр. Канмалли кунсенче çул çӳреве тухасси пирки шухăшлăр. Эрне кун ывăннине туятăр, çавăнпа сăлтавсăрах вĕчĕрхенетĕр. Йывăр вăхăтра юлташсем тĕрев пулĕç, çавăнпа вĕсемпе тăтăшах тĕл пулма тăрăшăр.

**Шыв тăкан.** Ыттисене пулăшни сирĕншĕнех лайăх пулĕ. Ку кăмăла çĕклĕ, йывăр шухăшсенчен сирĕ. Çак тапхăр çĕнĕ ĕç шырама меллĕ. Отпуск пирки манма тивĕ. Канас тесен нумай тар тăкмалла. Шăмат кунпа вырсарни кун тăванăрсене кĕрекене пухăр е çут çанталăк лапамĕнче канăр.

**Пулăсем.** Пустуй сăмах вакличчен ĕçе кӳлĕнĕр. Ытлари кун пуçлăхпа тавлашасран асăрханăр, мĕншĕн тесен хăвăра алăра тытмасан харкашу сиксе тухĕ. Юн кун таврари çынсемпе пĕр чĕлхе тупма йывăр пулĕ. Эрне кун кирлĕ документсене йĕркене кĕртĕр. Шăмат кунпа вырсарни кун ақăр-аннĕре пулăшма май тупăр.

# Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 13.09 | + 20 | + 10 | |
| 14.09 | + 18 | + 12 | |
| 15.09 | + 15 | + 8 | |
| 16.09 | + 12 | + 8 | |
| 17.09 | + 10 | + 5 | |
| 18.09 | + 10 | + 5 | |
| 19.09 | + 12 | + 7 | |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун”– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “Хыпар”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕ:
Йĕпреç – /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Номере 12.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8598. Заказ 3470.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.